ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

1952 çул
Январь
6
ВЫРСАРНИКУН
№ 5 (8657)
Хакĕ 20 пус.
34-мĕш çул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
Вăрман хатĕрлевĕ (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: Çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕçе вăйлатмалла. ВКП(б) райкомĕсен пленумĕсенчен (2 стр.).
Т. Никитин.—Сад çинчен хĕлле те манмалла мар (2 стр.).
С. Христофоров.—Профсоюз организаци ĕçне лайăхлатассишĕн (2 стр.).
Редакцие килнĕ çырусем (2 стр.).
И. Кузьмин, М. Александров, А. Соколова, Н. Власова.—Суту-илӳ ĕçне вăйлатассишĕн. «Чăваш Коммуни» хаçат бригадин рейчĕсен материалĕсем тăрăх (3 стр.).
Икĕ тĕнче—икĕ итог. «За прочный мир, за народную демократию!» хаçат страницисем тăрăх (3 стр.).
Н. Егоров.—Гизатулин рационализатор (3 стр.).
И. В. Сталин юлташ Киодо агентствин главнăй редакторĕ К. Ивамото господин патне янă послани пирки урăх çĕршывсенче мĕн çыраççĕ (4 стр.).
Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ мире сыхламалли килĕшӳ тума чĕнсе калани çине алă пустарас ĕç мĕнле пыни çинчен Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн секретариачĕ пĕлтерни (4 стр.).

Халăх сывлăхне сыхлассишĕн лайăхрах ĕçлемелле

Большевиксен партийĕпе Совет правительстви халăх пурнăçне лайăхлатассишĕн хытă тăрăшаççĕ. Çакă вăл совет медицини хăвăрт аталанса пынинче те уççăнах палăрать. Халăх сывлăхне сыхлас ĕç валли Совет государстви укçа-тенкĕ çулсеренех нумай уйăрса парать. Чăваш республикине илсен, халăх сывлăхне сыхлас ĕç валли иртнĕ çул вăрçă умĕнхи çулхинчен виçĕ хут ытларах укçа-тенкĕ расходланă. Юлашки çулсенче сывлăх учрежденийĕсем чылай хутшăнчĕç, вĕсенче ĕçлекен медицина кадрĕсен хисепĕ те тăтăш ӳсет. 1951 çулта, 1945 çулхипе танлаштарсан, республикăри сывлăх учрежденийĕсенче медицина работникĕсен хисепĕ икĕ хут çурă ытларах пулнă.

Халăха медицина енчен пулăшас ĕç пахалăхĕ çултан-çул лайăхланать. Вăрçă хыççăнхи çулсенче совет медицини çĕнĕ эмелсем нумай тупса пачĕ. Вĕсем халиччен сыватма пултарайман чир-чĕрсене сыватма май параççĕ. Вырăссен аслă ученăйĕн—Павлов академикăн вĕрентĕвĕпе медицинăра анлă усă курма тытăнни совет медицинин аталанăвĕнчи çĕнĕ паллă тапхăр пулса тăрать.

Больницăсемпе амбулаторисене тата поликлиникăсене пĕрлештерни халăха медицина пулăшăвĕ парас ĕçĕн пахалăхне ӳстерме, медицина работникĕсен пĕлĕвне, квалификацине хăпартма паха условисем туса пачĕ. Халĕ пирĕн сывлăх учрежденийĕсем нумайăшĕ халăха сыватмалли çĕнĕ оборудованисемпе пуянланчĕç. Юлашки виçĕ çул хушшинче кăна больницăсенчи рентген установкисем икĕ хут ытла ӳснĕ. Районти больницăсенче пуринче те клиникăллă лабораторисем ĕçлеме тытăннă.

Юлашки икĕ çул хушшинче сывлăх учрежденийĕсем валли ялсенче чылай çурт-йĕрсем туса лартрĕç. Тăвай, Первомайски районĕсенче больница, Хĕрлĕ Чутай, Элĕк районĕсенче икĕ участокри больница çурчĕсем туса лартнă. Çавăн пекех Вăрнарта ача çуратмалли çурт, Чурачăкра амбулатори тунă.

Халăх сывлăхне сыхлас ĕçре тунă çитĕнӳсем пире лăплантарма пултараймаççĕ. Парти обкомĕн VIII-мĕш пленумĕ халăха медицина енĕпе пулăшу парас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ. 1951 çулхи декабрĕн юлашки кунĕсенче пулса иртнĕ республикăри врачсен пиллĕкмĕш съезчĕ те Чăваш АССР Сывлăх министерствипе унăн вырăнти органĕсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене палăртрĕ. Республикăри медицина работникĕсем халĕ те трахома чирне пĕтерес тĕлĕшпе çителĕксĕр кĕрешеççĕ, çак ĕçе совет общественноçне начар хутшăнтарнă. Туберкулез чирĕпе кĕрешес ĕçре те пысăк çитменлĕхсем пур. Улатăрпа Канаш хулисенче, Çĕмĕрле, Вăрнар, Етĕрне, Куславкка тата Йĕпреç районĕсенчи больницăсенче ӳпке чирне тĕпчесе сăнас ĕçре рентген кабинечĕсемпе çителĕклĕ усă курмаççĕ. Улатăрти, Канашри тата Çĕмĕрлери больницăсенче физиотерапи аппарачĕсемпе начар усă кураççĕ. Хăшпĕр больницăсенче культурăлăхпа тасалăх тивĕçлĕ вырăнта тăмасть. Сĕнтĕрвăрри больницинче чир-чĕрсене тĕпчесе пĕлес ĕçре халĕ те йăнăшсем туни пулкалать Районти врачсем ялсенче сайра пулаççĕ, фельдшерсемпе медицина сестрисене практикăллă ĕçре çителĕксĕр пулăшаççĕ.

Чăваш АССР Сывлăх министерстви, районти тата хулари сывлăх пайĕсем, сывлăх учрежденисен руководителĕсем государство планĕсене пурнăçлассишĕн пур чухне те хастарлă кĕрешмеççĕ. Çак ĕç çине тимсĕррĕн пăхнă пирки Чкаловски, Çĕрпӳ, Муркаш, Хĕрлĕ Чутай районĕсенче фельдшер пункчĕсем уçмалли плана пурнăçлайман.

Медицина работникĕсем хушшинче политикăллă-воспитанилле ĕçе çителĕксĕр йĕркеленĕ. Сывлăх учрежденийĕсен коллективĕсенче критикăпа самокритика тивĕçлĕ вырăнта тăмасть. Врачсен съезчĕн делегачĕ—Канашри фельдшерпа акушер шкулĕн директорĕ Иванов юлташ çапла каларĕ:

— Пирĕн республикăри учительсем хăйсен квалификацине, политикăллă пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе начар мар ĕçлеççĕ. Вĕсем час-часах канашлусем, конференцисем, педагогикăллă вулавсем, «учительсен кунĕсем» тата ытти ĕçсем туса ирттереççĕ. Медицина работникĕсем хушшинче çакăн пек йăла çук вара, вăл ĕçсене пирĕн те тумалла вĕт! Хуласенчи врачсен научнăй обществисен ĕçне татăклăнах вăйлатмалла.

Çакă вăл тĕрĕс сăмах. Опытлă врачсем ытти врачсене, уйрăммăнах çамрăк врачсене вĕрентсе, ĕçре пулăшса пыма тивĕçлĕ. Çак ĕçре Шупашкарти больница врачĕсем пысăк вырăн йышăнса тăмалла. Шупашкар хулинчи больницăн, вăл пĕр вăхăтрах республикăри больница пулса тăнă май, районти больницăсене пур майпа та пулăшса пымалла. Анчах та республика столицинчи врачсем вырăнсенче сахал пулаççĕ, пулсан та хăйсен специальноçĕ енĕпе кăна кăтартусем парса хăвараççĕ, районта е хулара халăх сывлăхĕшĕн кĕрешес ĕç мĕнле пулса пынине тĕпчесе пĕлме тăрăшмаççĕ. Çак çитменлĕх вăл чи малтан Чăваш АССР Сывлăх министерствинчен килет. Сывлăх министерстви сывлăх учрежденийĕсен ĕçне оперативно, конкретно ертсе пымалла. Кашни медицина работникĕ государство умĕнчи ответлăха çивĕч туйса тăтăр.

Совет врачне Тăван çĕршыв ответлă ĕç шанса панă. Унăн совет çыннин сывлăхĕшĕн тăрăшмалла. Сикекен чир-чĕрсем ан пулччăр, тĕрлĕ чирсем сахалланса пыччăр, çамрăксем ырă-сыввăн çитĕнччĕр,— çаксене тума ыйтаççĕ совет çыннисем врачсенчен. Вĕсене пурнăçлама совет врачĕсем валли мĕн кирлине пĕтĕмпех туса панă. Халăх шанăçне тӳрре кăларассишĕн çине тăрса кĕрешни кăна кирлĕ.

Сывлăха сыхлас ĕçре пуçаруллăх кирлĕ. Чылай çĕрте халĕ электричество энергийĕ пур. Шыв, торф, тăм кирек ăçта та ытлăн-çитлĕнех пур. Ăш чирĕсенчен сыватас ĕçре çаксем, çавăн пекех физкультурăпа массаж меслечĕсем усăллă пулса тăнине пурте лайăх пĕлеççĕ ĕнтĕ. Вĕсене тума укçа-тенкĕ те нумай кирлĕ мар. Анчах халлĕхе пирĕн врачсем çаксемпе кирлĕ пек усă курмаççĕ.

Халăх сывлăхне сыхлас ĕçре хуласемпе ялсенче санитарипе гигиена, профилактика ĕçне анлăн сарса пыни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çак ĕçре республикăри санитари çурчĕн пуçаруллă пулмалла. Паянхи куна ку учреждени хăйĕн задачисене кирлĕ пек пурнăçлаймасть. Вăл вырăнсене салатса паракан литературăпа наглядлăй агитаци материалĕсем ĕççыннисем патне çитмеççĕ. Медицина работникĕсемпе вĕсен вырăнти активне ялсемпе хуласенчи тасалăхшăн кĕрешес ĕçе анлăрах хутшăнтарма кирлĕ. Ĕççыннисем хушшинче санитари пропагандине вăйлатса пымалла.

Партипе правительство халăх сывлăхне сыхлас ĕçе вăйлатма пирĕн республикăна пысăк пулăшу параççĕ. Кăçал тата çитес сывăх çулсенче республикăра больницăсем, поликлиникăсем, ача-пăча учрежденийĕсем çĕнĕрен чылай тумалла. Çак ĕçсене пурнăçлама партипе советсен вырăнти органĕсен çине тăрса кĕрешмелле, сывлăх учрежденийĕсен ĕçне вăйлатса пымалла. Сывлăх учрежденийĕсем валли кирлĕ чухлĕ укçа-тенкĕ уйăрса парасси, больницăсем, медицина пункчĕсем тума, вĕсен çурчĕсене юсама, вĕсем валли кирлĕ оборудовани туянма укçа-тенкĕ ытлăн-çитлĕн парса тăрасси ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсене тӳрремĕнех пырса тивекен ответлă задачăсем пулса тăраççĕ.

Совет çыннишĕн тăрăшасси—чи хисеплĕ ĕç. Совет çыннисен пурнăçпа йăла условийĕсене лайăхлатассишĕн кĕрешесси социализмлă общество аталанăвĕн законĕ пулса тăрать. Вырăнти партипе совет тата сывлăх органĕсен халăх сывлăхĕшĕн кĕрешес ĕçе пур майсемпе те вăйлатса пымалла. Халăха медицина енĕпе пулăшу парас ĕçĕн пахалăхне кунтан-кун лайăхлатса пырар!

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совет исполкомĕпе ВКП(б) хула комитечĕ тăратнă тăрăх 1951 çулхи производство планне срокчен тултарнăшăн республикăри Хисеп хăми çине çак предприятисене кĕртнĕ:

11. **Шупашкар хулинчи апат-çимĕç комбиначĕ** (директорĕ **Ефремов** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **Григорьев** юлташ, местком председателĕ **Можаров** юлташ). Апат-çимĕç комбиначĕ декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне продукци туса кăлармалли çулталăкри плана пĕтĕмĕшпе 116,4 процент, кондитерски изделисем туса кăлармалли плана 100 процент, варени, повидло туса кăлармалли плана 123 процент, пахча çимĕç хатĕрлесе хумалли плана 140 процент, тутлă шывсем тумалли плана 151,9 процент тултарнă, продукцин хăйне ларакан хакне 2,9 процент чакарнă, планран ирттерсе 169 пин тенкĕ тупăш тунă.

12. **Инвалидсен «Волга» артелĕ** (председателĕ **Ведин** юлташ, страховой бюро председателĕ **Бандина** юлташ). Артель декабрĕн 26-мĕшĕ тĕлне продукци туса кăлармалли çулталăкри плана пĕтĕмĕшпе 123,5 процент тултарнă, продукцин хăйне ларакан хакне 5,6 процент чакарнă, тупăш тумалли плана 137 процент тултарнă.

13. **1-мĕш çăкăр завочĕ** (директорĕ **Никитин** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **Ветков** юлташ, местком председателĕ **Чаплин** юлташ). Çăкăр завочĕ декабрĕн 16-мĕшĕ тĕлне çулталăкри плана 103,6 процент тултарнă, продукцин хăйне ларакан хакне 1,2 процент чакарнă, ĕç тухăçлăхне 3,6 процент ӳстернĕ, планран ирттерсе 128 пин тенкĕ тупăш тунă, 50 тонна çăнăх перекетленĕ.

14. **Инвалидсен «Чебторгин» артелĕ** (председателĕ **Пичужкин** юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ **Жидков** юлташ, страховой бюро председателĕ **Оплавин** юлташ). Артель декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне продукци туса кăлармалли çулталăкри плана 112,7 процент, тимĕр-тăмăр япаласем юсамалли плана 114,8 процент, тумтир çĕлесе кăлармалли плана 119,2 процент, трикотаж изделийĕсем туса кăлармалли плана 103,2 процент, атă-пушмак çĕнĕрен çĕлемелли тата киввисене юсамалли плана 123,8 процент тултарнă, ĕç тухăçлăхне 29,2 процент ӳстернĕ, продукцин хăйне ларакан хакне 1,2 процент чакарнă, планран ирттерсе 202,4 пин тенкĕ тупăш тунă.

15. **Шупашкар вăрман хими артелĕ** (председателĕ **Прокопьев** юлташ). Артель ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне продукци туса кăлармалли çулталăкри плана 117,3 процент тултарнă, продукцин хăйне ларакан хакне 5,7 процент чакарнă, плана пур изделисем енĕпе те тултарнă.

Вăрман хатĕрлевĕ

Обязательствăна чыслă пурнăçларăмăр

Чапаев ячĕпе тăракан колхозри лавçăсем вăрман турттарнă çĕрте хастарлă ĕçлеççĕ.

Октябрь уйăхĕн малтанхи кунĕсенче эпир, 10 лавçă, Аштăр вăрман участокне килтĕмĕр, каснă йывăçа çул хĕррине турттарма тытăнтăмăр.

Лавçăсем хушшинче малтанхи кунсенчех социализмлă ăмăрту анлă сарăлса кайрĕ. К. Канькин, В. Ситмушкин, Н. Почемкин. В. Кузьмин юлташсем кулленхи ĕç нормине 130—150 процент тултарса пычĕç.

Декабрь пуçламăшĕнче вăрман участокĕн начальникĕ И. Павлов юлташ пире Мускаври çӳлĕ çуртсем валли хатĕрленĕ йывăççене турттарма хушрĕ. Çак хисеплĕ заказа лавçăсем тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç, ăна пурнăçлассишĕн ырми-канми тăрăшса ĕçлерĕç. Хисеплĕ заказа кĕске срокра пурнăçларăмăр.

Муркашсен паха пуçарăвне ырласа, эпир хамăр çине çĕнĕ обязательствăсем илтĕмĕр. Сезонри вăрман турттармалли плана декабрĕн 23-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех пурнăçларăмăр. Сезон пуçланнăранпа çул хĕррине 2.686 кубометр йывăç илсе тухрăмăр. Ку вăл кашни лавçă пуçне 270 кубометра яхăн пулать.

Пирĕн колхозăн йывăç турттармалли планĕ пĕчĕк мар. Анчах çак плана эпир кĕске вăхăтра тата 10 лашапах ĕçлесе тултарма пултартăмăр. Пирĕн лашасем ялан мăнтăр та тĕреклĕ пулчĕç. Вăрмантан тухмасăр тата улшăнмасăр ĕçлерĕмĕр. Халĕ лавçăсем Тăван çĕршыв валли планран ирттерсе йывăç турттараççĕ.

Çакăн çинчен те асăнса илес килет: районти хăшпĕр колхоз лавçисем ĕçе тĕрĕс йĕркелемеççĕ, вăрманта улшăнса ĕçлеççĕ. Ĕç нормине тултармасăрах вăрмантан тухса каяççĕ. Çакăн пек ĕçлеççĕ те ĕнтĕ «Победа», Каганович ячĕпе, Крупская ячĕпе тăракан колхозсенчи лавçăсем. Вĕсен лавçисем 10 лашапа та пирĕн лайăх ĕçлекен пĕр лавçă чухлĕ вăрман турттарайман. Çакăн пек сӳрĕккĕн ĕçленĕшĕн пирĕн лавçăсем вăл колхозсем çине кăмăлсăр пулчĕç.

Эпир тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармастпăр, малашне тата хастарлăрах ĕçлеме сăмах паратпăр.

М. ОСИПОВ,
вăрман турттаракансен бригадирĕ.
Вăрнар районĕ.

Вăрмар районĕ мĕншĕн юлса пырать

Районти Мичурин ячĕпе тăракан, «Дружба», «Большевик», Хрущев ячĕпе тăракан колхозсем вăрман хатĕрлес ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Çав вăхăтрах чылай колхозсен председателĕсем государство заданине вăхăтра тултарассишĕн тивĕçлĕ ответлăх туймаççĕ.

Кивĕ Вĕренерти Молотов ячĕпе тăракан колхоз каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 2 процент çеç тултарнă. Унăн план тăрăх 700 фестмегр турттарса кăлармалла. Вăл йывăç турттарса кăларма пачах тытăнман. Колхоз председателĕ Иванов юлташ вăрман хатĕрлекенсем патĕнче пулмасть, вĕсен ĕçĕпе интересленмест.

«Знамя» колхозран халĕ вăрманта пĕр çын та, пĕр лав та ĕçлемест. Çавăн пекех Калинин ячĕпе тăракан колхоз та вăрман хатĕрлевне начар хутшăннă.

Чылай колхозсем юлса пынăшăн райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ ответлă. Вĕсем колхоз председателĕсен отчечĕсене час-часах итлесе сӳтсе яваççĕ, паха решенисем йышăнаççĕ, анчах решенисене мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕрĕслемеççĕ, колхоз руководителĕсемпе пуçламăш парторганизаци секретарĕсен ответлăхне ӳстерме тăрăшмаççĕ. Пĕр тĕслĕх. «Свобода» колхоз председателĕ Уливанов юлташ докладне райсовет исполкомĕнче те, ВКП(б) райком бюровĕнче те итленĕ. Райсовет исполкомĕ те, ВКП(б) райкомĕ те Уливанов юлташ йывăç хатĕрлес ĕçе япăх ертсе пынине палăртнă, ăна ĕçри çитменлĕхе хăвăрт пĕтерме хушнă. Райсовет исполкомĕ те, ВКП(б) райкомĕ те хăйсем йышăннă решенисене «Свобода» колхозра мĕнле пурнăçланине тĕрĕслемен. Çавна кура, Уливанов юлташ йывăç хатĕрлес тĕлĕшпе интересленме пăрахнă.

Сезон пуçлачнăранпа 3 уйăх иртрĕ. Район йывăç касса хатĕрлемелли плана çуррине те тултарман. Апла пулин те ку районтан вăрманта ĕçлекенсем сахал.

Вăрмар райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕн вăрман хатĕрлес ĕçре татăклă улшăнусем тума тивĕçлĕ мерăсем йышăнас пулать.

И. ПАВЛОВ.

И. Ф. Тевосян юлташа Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ тата СССР Хура металлурги министрĕ И. Ф. Тевосян юлташ 50 çул тултарнă май тата вăл Совет государстви умĕнче, металлурги промышленноçне аталантарас ĕçре тава тивĕçлĕ ĕçсем тунине палăртса. Иван Федорович Тевосян юлташа Ленин орденĕпе наградăлас.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ Н. ШВЕРНИК.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1952 çулхи январĕн 3-мĕшĕ.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

ЛЕНИНГРАД. Кировски заводри паллă фрезеровщик Евгений Савич пур операцисенче те тимĕре хăвăрт касмалла тăвассишĕн социализмлă ăмăрту пуçарма сĕннĕ. Вăл пĕр вăхăтрах темиçе тĕрлĕ ĕç тăвакан стахановла бригада организациленĕ. Бригада членĕсем пурте тимĕре хăвăрт касма тытăннă, вара ĕç тухăçлăхĕ 200—500 процент ӳснĕ. Савич пуçарнă ĕç пĕтĕм заводра сарăлнă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Е. Ф. Савич станока хăвăрт ĕçлеттермелле туни çинчен каласа парать. Сулахайран сылтăмалла—механически цехра хăвăрт ĕçлекенсене пулăшакан инструктор П. И. Сидоров, Е. Ф. Савич тата стахановец М. Я. Останин.

П. ФЕДОТОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Çĕнĕ çул пуçланнă кунсенче

ЧИТА. Петровски-Забайкальски металлурги завочĕн коллективĕ иртнĕ çулта пĕр тикĕс ĕçлесе пынă, тимĕр шăратса кăлармалли плана ăнăçлă тултарнă. Тимĕре хăвăрт шăратса тата прокат тумалли майсене лайăхлатса, планран ирттерсе çĕршер пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă.

Забайкальери металлургсем çĕнĕ çул пуçланнă кунсенче те пысăк хăвăртлăхпа ĕçлеççĕ. Çĕнĕ çул пуçлансан малтанхи виçĕ кун хушшинче прокат тумалли плана 120 процент тултарнă. Мартен цехĕнче ĕçлекенсем хурçă хăвăрт шăратса кăлараççĕ.

СВЕРДЛОВСК. Верх-Исетскри металлурги заводĕнче ĕçлекенсем çĕнĕ çул пуçланнă кунсенче питĕ ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Термически цехра ĕçлекенсем уйрăмах лайăх ĕçлесе, задание чылай ирттерсе тултарнă. Хисеплĕ металлург Федор Чучкалов ертсе пыракан бригада нормăна икĕ хута яхăн тултарнă, питĕ лайăх продукци туса кăларнă. Пĕрремĕш цехри прокатчиксем те стахановла ĕçленĕ.

Прокат туса кăлармалли плана завод ирттерсе тултарнă.

ИЖЕВСК. Кунти чугун çул работникĕсем çĕнĕ çул пуçланнă кун çĕршер вагон грузсем тиесе ăсатнă, задание чылай ирттерсе тултарнă. Çав кунхине «Куйбышевгидрострой» валли йывăç нумай тиесе янă.

Январĕн 3-мĕшĕнче чугун çул работникĕсем йывăр тиенĕ вуншар поезд ăсатнă, планран ирттерсе пиншер тонна груз турттарнă. Козлов машинист задание 2,5 хут ирттерсе тултарнă.

Власов, Ардашев, Обидин тата ытти машинистсем те йывăр тиенĕ поездсен вырăна вăхăтра илсе çитернĕ.

Январĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС).

Машиностроительсем ĕçе хăвăртлатса пыраççĕ

СТАЛИНО, январĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Краматорскри йывăр станоксем тăвакан заводра ĕçлекен мастерсем—Клименко, Гашенко тата Огулло юлташсем паха ĕç пуçарнă. Вĕсем, технологие улăштарса, пысăк станоксене хăвăртрах пухмалла тума сĕннĕ. Халиччен станоксен уйрăм пайĕсене черетпе пухса пынă пулсан, мастерсем станоксен нумай пайĕсене пĕр вăхăтрах пухса пымалла тунă, çапла вара станоксене икĕ хут хăвăртрах пухса çитерме май килнĕ.

Украинăри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Сталино обкомĕ новаторсем пуçарнă ĕçе ырласа, партин хула комитечĕсемпе райкомĕсене Краматорскри станкостроительсен опычĕпе мĕнпур рабочисене паллаштарма, ĕçе хăвăртлатассишĕн социализмлă ăмăрту организацилеме хушнă.

Краматорскри мастерсем пуçарнă ĕç сарăлсах пырать. Старо-Краматорскри Орджоникидзе ячĕпе тăракан машинăсем тăвакан заводри технологсемпе мастерсем стахановецсемпе пĕрле ĕçлесе, нумай машинăсен пайĕсене пĕр вăхăтрах пухмалли график туса хатĕрленĕ. Çапла вĕсем машинăсене пухас ĕçе икĕ хут хăвăртлатма палăртнă.

Петровский ячĕпе тăракан машинăсем тăвакан завод коллективĕ, нефть промышленноçĕ валли тăвакан насуссен пайĕсене пĕр вăхăтрах пухма тытăнса, çĕнĕ çулта насуссем 1,5 хута яхăн ытларах туса кăларать. Тимĕр конструкцисем тăвакан заводра, ялхуçалăх машинисем туса кăларакан заводра тата ытти предприятисенче те, Краматорскри машиностроительсен опычĕпе усă курма тытăннă хыççăн, продукци чылай ытларах туса кăларма пуçланă.

Çимĕç йывăççисене хĕллехи вăхăтра сыпаççĕ

КИЕВ, январĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Киев облаçĕнчи Белоцерковски вăрман хуçалăхĕнче ĕçлекен лесничи Кущенко тата сад ăстаçи Райт, нумай çул хушши опытсем тунă хыççăн, çимĕç йывăççисене хĕллехи вăхăтра сыпмалли лайăх май тупнă. Вĕсем ертсе пынипе вăрман лартса ӳстерекен звеновод Коцюба иртнĕ хĕлле çамрăк улмуççисемпе груша йывăççисене тата ытти çимĕç йывăççисене те 40 пин тĕп сыпнă, сыпнă йывăççем пурте лайăх чĕрĕлнĕ.

Белоцерковски ялхуçалăх институчĕн садĕнче те темиçе пин çимĕç йывăççисене хĕллехи вăхăтра сыпнă, кунта та сыпнă йывăççем пурте лайăх чĕрĕлнĕ.

Çимĕç йывăççисене хĕллехи вăхăтра сыпни, сыпнă йывăççем пурте лайăх чĕрĕлнисĕр пуçне, çак ĕçе рабочисем тата колхозниксем ытти ĕçсенчен пушăрах вăхăтра тумалла пулнипе лайăх.

Хĕллехи вăхăтра сыпмалли çамрăк йывăççене тата сыпнă чухне кирлĕ туратсене кĕркунне, çанталăк сивĕтиччен, хатĕрлесе хураççĕ, вĕсене февраль уйăхĕ çитиччен холодильниксенче усраççĕ. Сыпнă чухне йывăççене оранжерейăна е юр хатĕрленĕ çурта илсе кĕреççĕ. Сыпнă йывăççене ещĕке хурса, йĕпетнĕ пăчкă кĕрпипе е вак торфпа витеççĕ. Икĕ эрна яхăн иртсен, йывăççем сыпăнни палăрсан, ещĕксене леднике куçарса лартаççĕ. Йывăççене çĕр çине кăларса лартмалла пуличченех леднике усраççĕ.

Украина ССР Вăрман хуçалăх министерстви çимĕç йывăççисене хĕллехи вăхăтра сыпас ĕçе 1952 çулта наукăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсене тата малта пыракансен опытне пурнăçламалли плана кĕртнĕ.

Çĕнĕ çулта тракторсемпе ĕçлемелли план

СТАВРОПОЛЬ, январĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Либкнехт районĕнчи Овечкински МТС çĕнĕ çулта тракторсемпе ĕçлемелли план туса хатĕрлеме тытăннă.

МТС халиччен пулнă машинăсемпех кăçал 20 процент ытларах ĕç тума палăртнă. Механизаторсем уй-хир ĕçĕсене пысăк пахалăхпа тума, кашни гектартан 130 пăт тыră туса илме обязательство илнĕ.

МТС колхозсенче сурăх çăмĕ касас ĕçе, çавăн пекех вылăх апачĕсене вĕтетсе хатĕрлес ĕçе механизацилет.

Овечкински МТС коллективĕ сывăх çулсенче хăй ĕçлекен пур колхозсенче те мĕнпур ĕçе механизацилесе çитерме задача лартнă.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕçе вăйлатмалла

(ВКП(б) райкомĕсен пленумĕсенчен)

ВКП(б) Первомайски райкомĕн черетлĕ пленумĕ парти ретне çĕнĕрен илесси тата çамрăк коммунистсене воспитани парасси çинчен райком секретарĕн Н. Федоров юлташăн докладне сӳтсе яврĕ.

Иртнĕ çулхи февраль уйăхĕнче районти парторганизаци конференцийĕ ВКП(б) райкомне тата чылай пуçламăш парторганизацисене çамрăк коммунистсене идейăллă воспитани парас енĕпе начар ĕçленĕшĕн хытă критикăларĕ. Сентябрь уйăхĕнче ВКП(б) Чăваш обкомĕ Первомайски райкомĕ партие çĕнĕрен илес ĕçре йăнăшсем тунине тата çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕçе тивĕçлипе хакламаннине кăтартса пачĕ.

Унтанпа нумай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Анчах райком тата пуçламăш парторганизацисем çав решенисене пурнăçлас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Çамрăк коммунистсене воспитани парасси партиллĕ ĕçре халĕ те кая юлнă участок пулса тăрать. Пуçламăш парторганизацисен отчетпа суйлав пухăвĕсенче те парти кандидатĕнче нумайранпа тăракан коммунистсем çинчен чылай каларĕç. Ун пек кандидатсем халĕ районĕпе 57 çын шутланаççĕ.

Коммунистсене воспитани парасси вăл вĕсене кулленхи ĕçре, чи малтан, массăсем хушшинчи политикăллă ĕçре вĕрентсе пиçĕхтерессине пĕлтерет. Партиллĕ ĕçĕн çав чи кирлĕ енне чылай парторганизацисенче ăнланса çитеймеççĕ. Кандидатсемпе ĕçлессине начарлатнине уйрăмах «Осоавиахим» колхозри партбюро ĕçĕнче курма пулать.

Ку парторганизацири коммунистсем Е. Анисимов, А. Капралов, Ф. Кириллов, А. Раськин тата М. Шулаев юлташсем кандидатра 4—5-шер çул тăраççĕ. Мĕншĕн-ха вĕсем члена куçаймаççĕ? Парторганизаци руководителĕсем шутланă тăрăх, асăннă коммунистсем—«активлă» мар. Анчах парторганизаци çулталăкри ĕçĕсемпе палласшан, коммунистсен активлăхĕ çуккишĕн, чи малтан, партбюро хăй айăпли курăнать.

Чылай чухне кунта çамрăк коммунистсене уйрăм поручени панипех ĕç чаранса ларать. Парти поручение пурнăçлама сиййĕнчех пулăшманнипе, партиллĕ ĕç меслечĕсемпе паллаштарманнипе тата, чи кирли, кулленхи контроль пулманнипе çамрăк коммунистсем хăйсене хушнă ĕçе тăтăшах пурнăçламасăр хăвараççĕ.

Партбюро кандидатсен пурнăçĕпе тата ĕçĕпе ытла та сахал интересленет, вĕсем обществăллă ĕçре е колхозниксем хушшинче хăйсене хăйсем тĕрĕс мар тыткаланине сийĕнчех асăрхамасть, йăнăшĕсене вăхăтра тӳрлетмест, критикăпа самокритикăна анлăн сарма тăрăшмасть. Çавăнтан килет те ĕнтĕ 6 кандидатран 5 çын иртнĕ çулта пĕр пухура та тухса каламанни.

Коммунистсем ĕçри йывăрлăхсене çĕнтерессишĕн пыракан кĕрешӳре пиçĕхсе çитĕнеççĕ. Хăшпĕр пуçламăш парторганизацисенче çавна манаççĕ. Вĕсем çамрăк коммунистсене колхоз производствин ответлă участокĕсене уйăрса яма шикленсе тăраççĕ. Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозри парторганизаци — районта чи пысăккисенчен пĕри. Государство заданийĕсене пурнăçлас ĕçре кунти коммунистсем хăйсен организаторла пултарулăхне кăтартаççĕ. Анчах партбюро вăрман хатĕрлемелли стахановла вунăкунлăхра вăрман касакансен ĕçне йĕркелеме коммунистсене мар, колхозри агронома çеç хушса янă.

Çамрăк коммунистсене идейăллă воспитани парас задачăна пуринчен ытла политикăллă вĕренĕве лайăх организацилени татса парать. Первомайски районĕнче ку енĕпе те ĕç начар пырать. Райкомри сведенисем тăрăх, колхозсенчи çамрăк коммунистсене пурне те политшкулсемпе кружоксене хутшăнтарнă. Анчах кружоксен ĕçĕ çинчен райком сведенисем тăрăх çеç пĕлсе тăрать. Пленумра тухса калакансем чылай кружоксен ĕçĕ хальхи задачăсен çӳллĕшĕнче тăрайманнине палăртрĕç. Райкомăн пропагандăпа агитаци пайĕ политикăллă вĕренĕве çителĕксĕр ертсе пырать.

ВКП(б) Чăваш обкомĕ тата районти парторганизаци иртнĕ çулхи конференцийĕ те пуçламăш парторганизацисем ялхуçалăхĕнче малта пыракансен шучĕпе сахал ӳснине кăтартса панăччĕ. Çак кирлĕ кăтарту тивĕçлипе пурнăçланмасть. Сăмахран, 1951 çулта районти парторганизацире çĕнĕрен илнĕ 28 кандидат хушшинче вылăх-чĕрлĕх пăхас ĕçри пĕр работник та çук. Ку вăл, чи малтан, вылăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсем хушшинче политикăллă воспитани ĕçне йĕркелеменнинчен килнĕ.

Пленум хăйĕн решенийĕнче партие çĕнĕрен илес тата çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕçри ситменлĕхсене пĕтермелли мерăсене палăртрĕ.

Н. ВОЛКОВ.
(Хамăр корр.).

* * *

ВКП(б) Советски райкомĕн пленумĕ районти парторганизаци мĕнле ӳссе пыни тата çамрăк коммунистсене воспитани парасси çинчен сӳтсе яврĕ.

Районти парторганизаци иртнĕ çулта 61 çынна партие илнĕ. Çав шутра 19 колхозник, 3 хĕрарăм. Ялхуçалăх специалисчĕсенчен, тракторнстсемпе комбайнерсенчен пĕр çынна та парти ретне илмен. Хăшпĕр пуçламăш парторганизацисенче парти членне илнĕ чухне кашни çынна уйрăммăн тĕрĕслемелли принципа пăхăнмаççĕ.

Чылай парторганизацисем çамрăк коммунистсене воспитани парас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. «Победа» колхозри парторганизацире, сăмахран, 4 уйăх хушши коммунистсен пухăвне ирттермен.

Районти парторганизацире 109 кандидатран 73 çыннăн кандидатра тăмалли стаж иртсе кайнă. Коммунистсене идея тĕлĕшĕнчен ӳссе пыма райкомăн пропагандăпа агитаци пайĕ çителĕксĕр пулăшать. Чылай политшкулсемпе кружоксем йĕркеллĕ ĕçлемеççĕ. Пропагандистсен семинарĕсене икĕ хутчен кăна ирттернĕ. «Заря», Шверник ячĕпе тăракан колхозсенчи парторганизацисенчи политшкулсемпе кружоксенче 3—4-шар заняти кăна ирттернĕ. Парти историне харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсене пулăшма 21 консультант уйăрнă. Вĕсене пĕрре те пухса каламан.

В. МИХАЙЛОВ.

Мускаври К. А. Тимирязев ячĕпе тăракан ялхуçалăх академийĕнчи учёнăй-химиксем Ф. П. Платонов доцентпа И. А. Кобазев ассистент, В. В. Феофилактов профессор ертсе пынипе, çĕрулми вăхăтсăр шăтса ӳсесрен чармалли химипрепарачĕсем тупас тесе темиçе çул хушши ĕçленĕ. Опытсем туса çавăн пек йӳнĕ препаратсем тупнă.

Кун пек препаратсемпе сапнă çĕрулми çулла та кĕркуннехи пекех çирĕп пулать, унăн йывăрăшĕ чакмасть, крахмалĕ сахалрах пĕтет. Препаратсем сапнă çĕрулмин тути пĕртте улшăнмасть.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: сулахайран сылтăмалла—Ф. П. Платонов доцент, И. А. Кобазев ассистент тата В. В. Феофилактов профессор препаратсемпе сапнă çĕрулмисене пăхаççĕ.

В. ШАРОВСКИЙ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Сортлă вăрлăх улăштарса илес ĕçе хăвăртлатмалла

Сортлă мар вăрлăх парса колхозсенчен, Главзаготсортзерно склачĕсенчен сортлă вăрлăх улăштарса илмелли плана çирĕплетни икĕ уйăх ытла иртрĕ. Анчах та сортлă мар вăрлăхпа сортлă вăрлăх улăштарас ĕç республикăра питех те çителĕксĕр пырать. Колхозсем хушшинче вăрлăх улăштармалли плана январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 3,9 процент кăна, Главзаготсортзерно склачĕсенчен сортлă вăрлăх улăштарса илмелли плана 7 процент çеç тултарнă. Нумай районсем çак ĕçе тивĕçлипе тытăнман. Калинино, Буславка, Комсомольски, Кувакино, Сĕнтĕрвăрри, Сĕнтĕр, Шăмăршă, Етĕрне районĕсенчи колхозсем ку тараччен пĕр центнер сортлă вăрлăх та улăштарса илмен.

Иртнĕ çулсенче сортлă вăрлăх улăштарса илмелли плана колхозсене январь, февраль уйăхĕсенче кăна çитернĕ. Çавăнпа та нумай колхоз руководителĕсем плана кая юлса пĕлтерни ĕçе чăрмантарать, тесе ӳпкелешетчĕç. Сортлă мар вăрлăха сортлă вăрлăхпа улăштармалли плана кăçал пур районсем те таçанах пĕлеççĕ.

Пур колхозсен опычĕ те çакна кăтартса парать: сортлă вăрлăх акни тырпул тухăçлăхне чылай ӳстерет. Çак чăнлăха хирĕçлеме пĕр çын та пултараймасть.

Мĕншĕн-ха вара сортлă вăрлăх улăштарса илес ĕç япăх пырать?

Вырăнта тĕрĕсленинчен çакă курăнать: сортлă вăрлăх улăштарас ĕç япăх пыни нумай колхозсен тата район руководителĕсем ĕçсене черетпе, кампанилле тума юратнинчен килет. Чылай колхоз руководителĕсем çапла ăнлантарма пăхаççĕ: халĕ вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлемелле, çакă вăл сортлă вăрлăх улăштарса илме чăрмантарать теççĕ.

Чăн та, вăрман хатĕрлемелли плана тултарасси—питех те кирлĕ ĕç, уи çине тимлĕ пăхмалла. Анчах та уйрăм колхоз руководителĕсем, вăрманта ĕçленĕ ятпа витĕнсе, хăйсем колхозниксен ĕçне тĕрĕс йĕркелеме, туртăм вăйĕпе тĕрĕс усă курма пĕлменнине пытарма хăтланаççĕ.

Елчĕк районĕнчи колхозсен примерĕ çакна лайăх кăтартса парать: ĕçе тĕрĕс йĕркелесен сортлă вăрлăх улăштармалли плана ăнăçлă тултарма май пур. Елчĕк районĕнче колхозсем хушшинче вăрлăх улăштармалли плана январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 49 процент, Главзаготсортзерно склачĕсенчен сортлă вăрлăх улăштарса илмелли плана 22 процент тултарнă. Çакна пула районти колхозсенче вăрлăх фончĕсенче сортлă вăрлăх 97,3 процент шутланать. Район 1952 çулта талккишпех сортлă вăрлăх акма тытăнать.

Çав вăхăтрах Сĕнтĕр районĕнчи колхозсем январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 2.000 центнер вырăнне 7 центнер кăна сортлă вăрлăх улăштарса илнĕ. Район вăрман турттарса кăларас тĕлĕшпе те малтах пымасть. Районти колхозсенче сортлă вăрлăх 75 процент анчах шутланать, район ку тĕлĕшпе 25-мĕш вырăнта тăрать.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февральти пленумĕ йышăннă постановленире партипе совет тата ялхуçалăх органĕсене 1949 çултан пуçласа талккишпех сортлă вăрлăхсем акса тума хушнă.

Пĕтĕмĕшпех сортлă вăрлăх акса тума тытăнасси—хăй тĕллĕн пулакан ĕç мар, уншăн тимлĕ кĕрешмелле. Колхозсен вăрлăх фончĕсенче сортлă вăрлăхсем пулмалла. Колхоз руководителĕсен сортлă мар вăрлăха улăштарса халех кирлĕ чухлĕ сортлă вăрлăх хатĕрлесе çитермелле. Районсенчи совет тата ялхуçалăх органĕсен çак ĕçе пурнăçласси çине тимлĕ пăхмалла.

Агроном Н. ПЕТРОВ.

Сад çинчен хĕлле те манмалла мар

«Путиловка» колхоз салĕнче çулталăкĕпех ĕç чарăнмасть. Шахмат йĕркипе улмуççисем, чие йывăççисем, сливăсем, хăмла çырли, крыжовник, çĕр çырли лартса тухнă сад хĕлле те илемлĕн курăнса ларать. Йывăççен вуллисемпе турачĕсене известь шĕвекĕпе шуратнă, вĕсем юр пек шурă курăнаççĕ. Çамрăк йывăççен вуллисене те шуратнă, вĕсене чĕрчунсем кăшласран чăрăш турачĕсемпе чĕркесе сыхнă.

Садри ĕçсене пĕр звено тăвать. Вăл звенона утмăл икĕ çулхи ăста садовод О. Ермолаев юлташ ертсе пырать. Садра ĕçлекенсем кĕркунне ретĕ хушшисене, улмуççи йĕри-тавра апат парса катмакланă. Йывăççем çинче пĕр типĕ çулçă та çук, вĕсене хăй вăхăтĕнче пуçтарса çунтарнă. Çапла тунипе сиенлĕ хурт-кăпшанкăсене, вĕсен çăмартисене пĕтернĕ. Йывăççем тавра çĕрĕк тăпри хунă. Ку сала пырса куракансем сад мĕнле пулмаллине кураççĕ.

Садри ĕçсене пурне те вăхăтра, тĕрĕс туса пынă пирки çамрăк йывăççем те лайăх çитĕнеççĕ. вĕсен турачĕсем пĕр çу хушшинче 1—1.5 метр ӳсеççĕ.

1944 çулта лартнă улмуççисем виçĕм çул çимĕç пама тытăнчĕç. Колхоз 1950 çулта 1.500 тенкĕлĕх панулми сутрĕ. Пĕлтĕр çав улмуççисем ытларах çимĕç пачĕç. Колхоз 4 пин тенкĕлĕх панулми сутрĕ, колхозниксене те ăна ĕçкунĕсем тăрăх чылай валеçсе панă.

«Путиловка» колхоз садне ытти колхозсенчи садоводсем те пырса кураççĕ. Акă «Правда», Крупская ячĕпе тăракан колхозсенчи Атамов, Никитин садоводсем кунта малта пыракан опытпа паллашма килнĕ.

— Çитес çулла нумайрах çимĕç илес тесе, пирĕн садоводсем тăрăшса ĕçлерĕç,—тет Ермолаев юлташ.—Анчах сала кĕрĕн-çăвĕн пăхни кăна çителĕксĕр, ăна хĕлле те лайăх пăхмалла.

Хĕлле çимĕç йывăççисене мулкачсем, шăшисем кăшлама пултараççĕ тата йывăççем сиввĕпе те час-часах хăраççĕ. Февральпе март уйăхĕсенче кăнтăрла хĕвел питтинче йывăççен вуллисем ăшăнаççĕ, çĕрле пите сивĕнеççĕ. Çавăнпа та йывăç хуппи çурăлать. Кун пек чухне те йывăç хăрса ларма е нумай вăхăтлăха суранланма пултарать.

Хĕллехи вăхăтра кашни юр çумассерен йывăççем тавра таптаса хытараççĕ. Çапла тунипе шăшисем йывăç патне пыраймаççĕ.

Çанталăк ăшăтсан çиелти юр пăрланать. Çак пăр çамрăк йывăççăн хуппине касать, çулла вара йывăç хăрма та пултарать. Çавăнпа та пăрланнă юра ватсах пыраççĕ.

«Путиловка» колхозра хĕлле садра юр тытса хăвараççĕ. Юр хулăмрах пулсан, йывăç тымарĕсем сивĕпе аптрамаççĕ, унсăр пуçне тата нӳрĕ нумайрах тытăнса юлать. Ку анчах та мар, юр хулăм чухне ирĕлессе те çуркунне вăл часах ирĕлсе пĕтмест. Кунсăр пуçне, март уйăхĕн вĕçĕнче йывăç тавра улăм е торф хураççĕ. Çаксем пурте йывăçа каярах чечеке ларма пулăшаççĕ. Ку вăл вара питĕ кирлĕ, мĕншĕн тесен ир çурăлакан йывăç чечекне çуркуннехи тăм сиен кӳме пултарать. Йывăç каярах юлса чечеке ларсан çуркуннехи тăмран хăтăлать, çимĕç нумайрах тăвать.

1939—1942 çулсенче «Путиловка» колхозăн малтанхи сачĕ сивĕпе пĕтнĕччĕ. Ермолаев юлташ тăрăшнипе çĕнĕ сад лартнă. Халĕ вăл 9 гектар йышăнать.

— Районта Мускайран хăшпĕр колхозсен сачĕсем 20—30 гектар йышăнни çинчен пĕлтереççĕ,—тет ватă садовод.—Эпир хамăр колхоз садне те пысăклатма тăрăшатпăр.

Колхозăн питомник пур. Унта вăрăран шăтарнă улмуççисем виçĕ пин ытла шутланаççĕ, вĕсене Мичуринăн чи лайăх сорчĕсемпе сыпма хатĕрлеççĕ. Сывăх вăхăтсенчех сад 15 гектара çитмелле.

Сад ĕрчетсе пысăк тупăш илесси — кашни колхозăн тивĕçĕ. Ялхуçалăхĕн тĕрлĕ отраслĕсене аталантарни колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен малалла тĕреклетсе пыма, ĕç вăйĕпе тĕрĕс усă курма май парать.

Агроном Т. НИКИТИН.
Йĕпреç районĕ.

Редакцие килнĕ çыру

„Новая жизнь“ колхоз мĕншĕн аталанмасть?

Октябрьски районĕнчи «Новая жизнь» колхоз юлса пыракан колхоз шутланать. Колхоз кая юлса пыни чи малтанах колхоз председателĕ тата правлени членĕсем тăрăшса ĕçлеменнинчен, колхозра дисциплина япăххинчен килет.

Иртнĕ çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра, пысăк пахалăхпа ирттереймерĕç, агротехника вĕрентĕвĕсене пăсса ĕçлерĕç, çанталăк условийĕсем лайăх пулчĕç пулин те декабрĕн 10-мĕшĕнче çеç авăн çапса пĕтерчĕç. Кашни гектартан вăтам шутпа 7,9 центнер çеç тĕштырă тухрĕ. Çапла ĕнтĕ производствăллă планпа 13,5 центнер тĕштырă туса илме палăртни пурнăçа кĕреймерĕ.

Колхозра нумай çул хушши ӳсекен курăксем акса тăвассине хакламаççĕ.

Хăмла—тупăш паракан культура. Кунта вăл 6 гектар йышăнса тăрать. Анчах хăмла пахчинчи ĕçсене вăхăтра туса пырайман пирки, кашни гектартан 2,5 центнер çеç хăмла туса илнĕ.

Обществăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана тултарма татах 13 лаша, 7 ĕне, 93 сысна, 15 сурăх, 1650 чăх-чĕп, 59 хур кирлĕ. Çак плана тултарма пур условисем те çителĕклĕ пулнă. Анчах тимсĕр пăхнине пула кунта вылăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк нумай вилсе пĕтнĕ. Колхоз председателĕ Смирнов юлташ, правлени ларăвĕсенче йышăнмасăрах 164 сысна çурине сутса янă. Çапла ĕнтĕ вылăх-чĕрлĕхсен шучĕ хутшăнас вырăнне чакса пырать.

Кăçал кашни ĕнерен 548 литр çеç сĕт суса илнĕ, кашни сурăхран 1,900 грамм çеç çăм пухнă, кашни чăхран—39 çăмарта илнĕ.

«Новая жизнь» колхоз государство умĕнчи парăмсене те вăхăтра татайман. 14,8 центнер сысна какайĕ тата 7.723 литр сĕт памалла.

Колхоз начарланса пыни ĕç дисциплини çуккинчен килет. Хăшпĕр колхозниксем ĕçе активлăн хутшăнмаççĕ. И. Васильев юлташ бригадинче ĕçе тухакансен шучĕ 15—17 çынтан та иртмест. Колхозĕпе илсен 27 колхозник ĕçкунĕсен минимумне тултарман.

Çитменлĕхсем нумай, анчах вĕсене вăхăтра тăрă шыв çине кăларма çук, мĕншĕн тесен колхозниксен пухăвĕсем сахал пулаççĕ. 1951 çулта пурĕ те икĕ пуху çеç пулнă. Правлени членĕсен ларăвĕсем те вăхăтра пулса иртмеççĕ. Чылай чухне правлени ларăвĕнче сӳтсе явмалли ыйтусене колхоз председателĕ Смирнов хăй тĕллĕн татса парать.

«Новая жизнь» колхозра татăклă улшăну кирлĕ.

В. ТРОФИМОВ.

„Чăваш Коммуни“ хаçатра çырнă хыççăн

„Ĕçре татăклă улшăну тумалла“

Ноябрĕн 21-мĕшĕнче «Чăваш Коммуни» хаçатра пичетленнĕ «Ĕçре татăклă улшăну тумалла» ятлă статьяра Елчĕк районĕнчи хăшпĕр колхозсем вăрман хатĕрлевне кирлĕ пек хутшăнманнине, райсовет исполкомĕ уйрăм ял Совечĕсемпе колхоз правленийĕсем вăрман хатĕрлевне йĕркелес тĕлĕшпе тунă йăнăшсене тӳрлетменнине кăтартса панăччĕ.

Район Совечĕн исполкомĕ «Ĕçре татăклă улшăну тумалла» ятлă статьяна райсовет исполкомĕн ларăвĕнче сӳтсе явни, вăрман хатĕрлев планне кашни ял Советпа колхоз тултармалла тăвассишĕн тивĕçлĕ мерăсем йышăнни çинчен пĕлтерчĕ.

„Обществăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе большевикла ертсе пыни кирлĕ“

«Чăваш Коммуни» хаçатра декабрĕн 2-мĕшĕнче пичетленсе тухнă «обществăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе большевикла ертсе пыни кирлĕ» ятлă умстатьяра тата Х. Лисинăн декабрĕн 5-мĕшĕнче пичетленнĕ «Пĕр-пĕрин çине шанса ларсан» ятлă статьинче Ишлей районĕнчи «Активист» колхозра обществăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе хакламаннине, вылăхсене хĕл каçарма çителĕксĕр хатĕрленнине, колхоз майракаллă шултра вылăхсем, сыснасем тата чăх-чĕп ĕрчетмелли плана тултарманнине, вылăх-чĕрлĕхрен продукци сахал илнине кăтартса панăччĕ.

Ĕççынни депутачĕсен Ишлей район Совечĕн исполкомĕ çак икĕ статьяра та фактсене тĕрĕс кăтартса пани çинчен пĕлтерчĕ.

Район Совечĕн исполкомĕ ялхуçалăх пайĕн заведующине Николаев юлташа вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе ертсе пырассине лайăхлатма хушнă, колхозсенче вылăх-чĕрлĕх пăхассине йĕркелеме зоотехниксемпе ветеринарсене çирĕплетнĕ.

Район Совечĕн исполкомĕ çавăн пекех колхоз председателĕсене вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе тĕпрен лайăхлатма хушнă.

„Хаçат витринисем пирки“

Декабрĕн 11-мĕшĕнче «Чăваш Коммуни» хаçатра А. Тукмаков çырнă «Хаçат витринисем пирки» ятлă çыру пичетленнĕччĕ.

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн культурăпа сутĕç пайĕ çырура фактсене тĕрĕс кăтартни çинчен, çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнни çинчен пĕлтерчĕ.

Профсоюз организаци ĕçне лайăхлатассишĕн

Атăл леш енчи торф предприятийĕнчи профсоюз организацийĕ предприятие пысăк ӳсĕмсем тума пулăшать. 1951 çулта торф кăлармалли плана предприяти 137 процент тултарнă. Рабочисен коллективĕ планран ирттерсе 27 пин тонна лайăх пахалăхлă торф хатĕрленĕ. Иккĕмĕш кварталта социализмлă ăмăртура лайăх ĕçленĕшĕн ВЦСПС-па РСФСР Вырăнти топливо промышленность министерстви предприятие виççĕмĕш преми панă. Виççĕмĕш кварталта торфяниксен коллективĕ Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Облпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулнă.

Иртнĕ çулта профсоюз организацийĕ 800 çынна профсоюз членне илнĕ. Çапла вара профсоюз организацийĕ халĕ мĕнпур рабочисенчен 99 процентне пĕрлештерсе тăрать. Профорганизаци член укçи пухмалли плана ирттерсе тултарнă.

Çапах та профсоюз организацийĕ хăйĕн ĕçне кирлĕ пек йĕркелесе çитереймен. Уйрăмах яланхи комиссисем япăх ĕçлеççĕ. Торфком отчечĕ тăрăх, профсоюз членĕсенчен нумайăшне политикăллă вĕренĕве хутшăнтарни курăнать. Анчах вĕренӳ пахалăхĕ мĕнлине торфком пĕлмест. Профсоюз организацийĕнчи ертсе пыракан работниксем группоргсемпе торфком членĕсем хăйсем те занятисене сиктерсе çӳреççĕ.

Обществăллă инспекторсем те начар ĕçлеççĕ. Физкультурăпа спорт ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе торфком ытла та сахал тăрăшать. Физкультура инвентарьне салатса пĕтернĕ, Конькипе чупакансен ăмăртăвĕсене ирттерме каток пур. Анчах профсоюз комитечĕ массăллă спорт ĕçне организацилесе, ертсе пымасть.

Торфком членĕсен ĕçне кирлĕ пек йĕркелемен. Сăмахран, Шефер юлташ физкультура ĕçне аван пĕлет. Вăл ку тĕлĕшпе ятарласа вĕреннĕ. Шефер юлташ физкультура ĕçне ертсе пыма пултарнă. Анчах ăна вара ĕç укçи комиссийĕнче ĕçлеттернĕ. Кузьмин юлташ физкультура ĕçне кирлĕ пек пĕлмест пулин те ăна спорт ĕçне организацилесе пыма хушнă. Ытти комиссисене ертсе пырас ĕçре те çавăн пек йăнăшсем пур.

Коллективлă договора çирĕп пурнăçлассишĕн кĕрешес тĕлĕшпе торфком хăйĕн пуçарулăхне ӳстермест. Вăл ĕççыннисен сывлăхне упрас тĕлĕшпе сахал ĕçлет. Рабочисем ĕçленĕ çĕрте час-часах вĕретнĕ шыв пулмасть. Торф кăларакан машинăсем çинче аптечкăсем çук.

Культурăллă-массăллă ĕçре те çитменлĕхсем нумай. Драмкружок малтанлăха аван ĕçленĕ, анчах юлашки вăхăтра коллектив саланса кайнă.

Профсоюз комитечĕ социализмлă ăмăртăвăн çĕнĕ условийĕсене рабочисем патне вăхăтра çитермен. Социализмлă договор мĕнле пурнăçланса пынине сайра-хутра кăна тĕрĕслеççĕ. Торф тиекен бригадăсенче ăмăрту договорĕсем туман. Производство ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе механизаторсемпе рационализаторсен пуçарăвне вăйлатса пыни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Анчах торфком вĕсемпе ĕçлемест, производствăллă канашлусем те сахал ирттерет.

1952 çулта пĕлтĕрхинчен 60 процент ытларах торф кăларма палăртнă. Сезон пуçланиччен торф выртакан 50 гектар лаптăка çĕнĕрен тасатса хатĕрлеме тивет. Правительство панă çак хисеплĕ те ответлă задание пурнăçлас тесен, профсоюз организацийĕн ытларах ĕçлемелле, массăсен социализмлă ăмăртăвне кулленех вăйлатса пымалла.

С. ХРИСТОФОРОВ.

Бригадăсенче политикăллă-массăллă ĕçе вăйлатмалла

Комсомольски районĕнчи пĕрлешсе пысăкланнă уйрăм колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем колхозниксем хушшинчи политикăллă-массăллă ĕç тĕлĕшĕнчен пысăк йăнăшсем тăваççĕ. Вĕсем колхоз правленийĕ пур ялта çеç агитацилле-массăллă ĕç тăваççĕ, ытти ялсенчи е бригадăсенчи колхозниксем хушшинче нимĕн те тумаççĕ.

Хрущев ячĕпе тăракан колхоз Дубовка, Сĕнĕ Касал тата Васильевка ялĕсенчи колхозсенчен пĕрлешсе пулнă. Колхоз правленийĕ, клуб, библиотека, агитпункт тата ытти культурăлла учрежденисем Дубовка ялĕнче вырнаçнă. Ку ялта тăтăшах лекцисем, докладсем, спектакльсем пулаççĕ, эрнере пĕрре кино кăтартаççĕ.

Анчах пуçламăш парторганизаци (секретарĕ А. Семенов юлташ) ытти ялсенчи колхозниксен культурăллă ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе нимĕн те тумасть.

— Эпир,—теççĕ Васильевка ялĕнчи (3-мĕш бригадăри) колхозниксем, — виçĕ çул хушши кино курман, колхоз пĕрлешнĕренпе вара политикăллă ыйтусем тăрăх, тĕнчери лару-тăру çинчен пĕр лекцие те, доклад та итлемен. Кино курас пулсан Дубовка ялне, икĕ çухрăм ытла кайма тивет.

Колхоз пĕрлешсе пысăкланнăран вара бригадăсенче колхозниксен пухăвĕсене те 2—3 хут кăна ирттернĕ.

Бригадăсенче политикăллă-массăллă ĕçе япăхтарни çинчен калакан тĕслĕхсем те районта сахал мар. «Красное Сормово», «Родина», Киров ячĕпе тăракан, Берия ячĕпе тăракан тата ытти хăшпĕр колхозсенче те политикăллă-массăллă ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен. Сăмахран, «Красное Сормово» колхоза кĕрекен Ахметово ялĕнче кинокартинăсем пулмаççĕ, бригадăри колхозниксем валли лекцисем, докладсем ирттермеççĕ.

Политикăллă-массăллă ĕçе колхозăн ялти центрĕнче анчах мар, ытти ялсенче те туса пымалла.

А. ЕРЕМЕЕВ.

Коммунистсем бюро ĕçне лайăхлатма сĕнӳ параççĕ

ЧУРАЧĂК. «Прогресс» колхозри пуçламăш парторганизацин отчетпа суйлав пухăвĕ пулса иртрĕ.

Вăйлă тырпулшăн, пысăк тухăçлă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн пыракан кĕрешӳре парторганизаци хăйĕн пулăшăвне сахал мар кăтартрĕ. Парторганизаци ертсе пынипе артелĕн общественнăй хуçалăхĕ чылай ӳснĕ. Колхоз кăçал гектартан 15,5-шер центнер вырăш пухса илчĕ. Малтанхи çулхисемпе танлаштарсан, иртнĕ çулта тырпул тухăçлăхĕ пур культурăсем тĕлĕшпе те палăрмаллах ӳснĕ. Анчах вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли виçĕ çуллăх плана вăхăтра тултараймарĕ. Государствăна тыр памалли плана колхоз иртнĕ çулта районта пуринчен малтан тултарнă.

Коммунистсен отчетпа суйлав пухăвĕ активлă иртрĕ. Тухса калакан юлташсем партбюро ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртса хăварĕç. Коммунистсем партбюрона уйрăмах хăшпĕр ĕçсене кирлĕ пек ертсе пыманнине критикларĕç. Коммунистсен партбюрона колхозниксем хушшинчи политикăллă-массăллă ĕçе, çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕçе вăйлатма сĕнчĕç.

В. ПЕТРОВ.
О. ИВАНОВ.

Суту-илӳ ӗҫне вӑйлатассишӗн

„Чӑваш Коммуни" хаҫат бригадин рейчӗсен материалӗсем тӑрӑх

Партипе правительство кашкӑн сутмалли таварсен хакӗсене тӑваттӑмӗш хут йӳнетнӗ хыҫҫӑн, совет халӑхӗн пурнӑҫӗ татах та лайӑхланчӗ. Рабочисен ӗҫ укҫи, колхозниксен тупӑшӗ пӗрмаях ӳсет. Совет укҫи тӑтӑш ҫирӗпленет.

Ӗҫҫыннисем хӑйсене кирлӗ таварсем туянасси ҫултан-ҫул ӳссе пырать. Ҫавна май суту-илӳ организацийӗсем умӗнче пысӑк та ответлӑ задачӑсем тӑраҫҫӗ. Вӗсен суту-илӳ ӗҫне татах вӑйлатмалла, магазинсемпе ларексен, столовӑйсен ӗҫне лайӑхлатмалла, тавар ҫаврӑнӑшне кунтан-кун ӳстермелле.

«Чӑваш Коммуни» хаҫат корреспонденчӗсен бригади Канаш хулинчи суту-илӳ организацийӗсем мӗнле ӗҫлени ҫинчен тӗрӗслени кунта суту-илӳ организацийӗсен ӗҫӗнче халӗ те ҫитменлӗхсем нумай пулнине кӑтартса пачӗ.

Ҫӑматӑ ӑҫта илмелле?

Магазина пӗр ватӑрах ҫын кӗчӗ. Вӑл йӗри-тавра пӑхса илчӗ те, кӑмӑлсӑррӑн ҫапла ыйтрӗ:

— Сирӗн те ҫӑматӑ ҫук-и вара?

— Ҫук... Хӗле кӗнӗренпе те пулман,— ответлерӗ ӑна Г. Ильина продавщица.

— Мӗнле вара? Ӑҫта илме пулать-ши ӑна?—татах ыйтрӗ колхозник.

— Темле ҫав... Хулари пӗр лавкара та тупаймӑн... Акӑ, кирлех пулсан, резина атӑ илӗр...

Канаш хулинчи магазинсенче хӗлле пулнӑранпа та ҫӑматӑ сутман. Ҫулла кирлӗ таварсене хӗлле илсе килеҫҫӗ, хӗлле кирлӗ таварсем ҫулла ахаль выртаҫҫӗ.

— Ҫуллахи таварсене хӗлле илсе килнипе тавар ҫаврӑнӑш планне тултараймарӑмӑр,—тет атӑ-пушмак сутакан магазин заведующийӗ Н. Павлов юлташ.

Мӗнпе чӗркесе каймалла-ши?

Канашторгӑн 1-мӗш магазинне ҫынсем лапша илме пынӑ.

— Манӑн чӗркесе кайма нимӗн те ҫук. Сирӗн чӗркемелли хут тупӑнмӗ-ши,— ыйтрӗ пӗри.

— Нимӗн те ҫук, — тет Т. Никонова продавщица. Лапша илме пынӑ хӗрарӑм нимӗн тума пӗлмесӗр йӗри-тавра пӑхкаласа илчӗ те, пуҫӗнчи тутӑрне салтрӗ...

Хулари магазинсенче ӗҫҫыннисем илекен таварсене чӗркемесӗрех парса ярас йӑлана ҫак тарана ҫитиччен те пӗтермен.

1-мӗш магазинта кашни тавар валли уйрӑм пайсем пур. Анчах таварсене мӗнле лекнӗ ҫапла хунӑ. Ҫӑмахран, эрех сутма ятарласа уйрӑм уҫнӑ пулин те, эрех кӗленчисем ытти пайсенче те пур. Ҫавӑн пирки магазина пыракансем унта мӗнле япаласем пуррине лайӑх кураймаҫҫӗ.

Культура таварӗсем сахал

Хулара та, ялта та ҫӗнӗ строительство хӑвӑрт саралса пырать. Колхозсенче общественлӑ ҫуртсем, выльӑх-чӗрлӗх витисем тӑваҫҫӗ. Анчах суту-илӳ организацийӗсем строительство материалӗсем кирлӗ таран кӳрсе килмеҫҫӗ. Канаш хулинче тимӗр-тӑмӑр япаласем сутакан магазинсем тӑватӑ ҫӗрте пур. Унта чылайранпа пӑта ҫук. Ӗҫҫыннисемпе колхозсем пӑта туянма Хусана е Горький хулине каяҫҫӗ.

Ӗҫҫыннисене радиоприемник, радиола, патефон, фотоаппарат, ҫӗвӗ ҫӗлемелли машина ытларах кирлӗ. Хулари магазинсенче культура таварӗсем сахал сутаҫҫӗ.

1951 ҫулта Канаш районӗнчи ӗҫҫыннисем ялсене радиофикацилес тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем тума палӑртрӗҫ. Суту-илӳ работникӗсем радио таварӗсем ҫителӗклӗ кӳрсе килме тӑрӑшмаҫҫӗ.

Халӗ ялсемпе хуласенче физкультурӑпа спорт ӗҫӗ кунран-кунах вӑйланса пырать. Час-часах йӗлтӗрҫӗсен ӑмӑртӑвӗсем пулса иртеҫҫӗ. Суту-илӳ организацийӗсем йӗлтӗрҫӗсем валли костюм сахал илсе килеҫҫӗ.

— Ҫулла темӗн чухлех пулнӑ, халӗ сутса пӗтертӗмӗр,—теҫҫӗ магазин работникӗсем.

Продавщица чӑлха ҫыхать

«Швейник» промартель магазинӗнче никам та ҫук. Г. Павлова продавщица чӑлха ҫыхса ларать. Хутран-ситрен шӑннӑ аллине вӗрсе ӑшӑтать.

Эпир магазина пырса кӗрсен вӑл пуҫне ҫӗклерӗ.

— Мӗн сутатӑр,— ыйтрӑмӑр эпир унтан.

— Мӗн пултӑр... акӑ кӗпе пур, кирлӗ пулсан картус та илме пултаратӑр,—терӗ вӑл йӗри-тавра кӑтартса.

Эпир прейскурант ҫине ҫырнӑ таварсене ыйтрӑмӑр.

— Пальто пур-и?

— Ҫук,—ответлет.

— Ҫӗлӗк пур-и?

— Вӑл та ҫук.

Прейскурант ҫине ҫырнӑ таварсенчен 25 проценчӗ те магазинра ҫук. Ӑна ячӗшӗн кӑна, «илемлӗ» пултӑр тесе ҫырса ҫакнӑ.

«1-мӗ Мая» артель магазинӗнче ӗҫҫыннисене кирлӗ таварсем сахал. Магазин заведующийӗ Н. Петрова юлташ пире ҫапла каласа пачӗ:

— Ӗҫҫыннисем куллен этажерка, сӗтел-пукан, пружинӑллӑ матрац ыйтаҫҫӗ, анчах ҫав таварсем сайра-хутра ҫеҫ пулаҫҫӗ. Ҫитменнине тата хакӗ те хаклӑ. Чӑвашторг магазинӗсенче юман пукан 50 тенкӗ тӑрать пулсан, эпир ҫӑкаран тунӑ пукана 50 тенке сутатпӑр. Таварсем каймаҫҫӗ, тесе артель чылай япаласем тума пӑрахрӗ,—тет вӑл.

Учебниксемпе ача-пӑча кӗнекисем пирки

Кӗнеке магазинӗнче ялтан килнӗ колхозник 3-мӗш класра вӗренекенсем валли учебниксем ыйтрӗ.

— Пирӗн ун пек кӗнекесем ҫук,— тет Андреев продавец.

— Хӑҫан пулать-ши?—пӗлесшӗн пулчӗ колхозник.

— Пӗлместӗп ҫав...

Нумай вӑхӑт та иртмерӗ, тепӗр ҫамрӑк ача магазина кӗчӗ.

— Мана «Основы дарвинизма» ятлӑ кӗнеке кирлӗччӗ,—ыйтрӗ вӑл продавецран.

— Ун пек кӗнеке пулман,—тет Андреев.

Кӗнеке магазинӗнче ытти учебниксем те сахал. Ача-пӑча вуламалли кӗнекесем ҫукпа пӗрех.

— Пӗр уйӑх ӗҫлетӗп кунта, илемлӗ литература кӗнекисене пӗрре те илсе килмерӗҫ,—тет Андреев продавец.

Ҫавӑн пекех Союзпечӗтӗн киоскӗнче те учебниксемпе ача-пӑча литератури сахал.

«Союзпечет» уйрӑмӗ ҫӗнӗ киоск уҫрӗ. Анчах вӑл ытла та пӗчӗккӗ. Унта кӗнекесемпе хаҫат-журналсене сарса хума та вырӑн ҫитмест. Хӑшпӗр чух ҫӗнӗ хаҫатсене икӗ-виҫӗ кун иртсен тин илсе пырса сутаҫҫӗ.

Хула пасарӗнче

Канаш хулинчи пасара ҫак ҫулсенче ҫӗнӗ вырӑна куҫарса лартса, ӑна чылай аслӑлатрӗҫ. Ҫавах та пасарта йӗркелӗх сахал. Сӗт-ҫу, пыл сутмалли хупӑ вырӑнта час-часах махорка, савӑт-сапа сутаҫҫӗ.

Ялпосенчен е ытти ҫӗртен килекен ларексен чылайӑшӗн прейскурант ҫук. Шӑхасан районӗнчи «Кипеч ялповӗн лавки умне икӗ хӗрарӑм пырса тӑчӗҫ.

— Ку пир-авӑр мӗн чухлӗ тӑрать?— ыйтрӗ вӗсенчен пӗри.

— Вунултӑ тенкӗ,—ответлерӗ продавец.

— Ӑҫтан пӗлен... тен, йӳнӗрех тӑрать пулӗ?

— Прейскурантне кӑтарт-ха,—ыйтрӗ тепри.

— Прейскурант пирӗн ҫук. Унсӑрах пӗлетпӗр...

Ялхуҫалӑх продукчӗсемпе суту-илӳ тӑвакан вырӑнта лашасемпе ӗнесем тӑраҫҫӗ.

Суту-илӳ ӗҫӗнчи кадрсем пирки

Канашторг дирекцийӗ кадрсемпе питӗ начар ӗҫлет, вӗсен пӗлӗвне ӳстерессишӗн тӑрӑшмасть, работниксене час-часах улӑштарать. Икӗ ҫул хушшинче 4-мӗш магазинра 12 продавец улшӑннӑ.

Канашторг директорӗ П. Калинин юлташ ӗҫе тивӗҫлипе йӗркелесе ярас вырӑнне, хӑшпӗр ӳсӗмсемпе мухтанса ларать, критикӑлакансене хӗсме пӑхать, ӗҫре пӑсӑлнӑ ҫынсене хӳтӗлесе пырать.

Суту-илӳ работникӗсем хушшинче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе чӑтма ҫук начар туса пыраҫҫӗ, производствӑллӑ канашлусем сайра-хутра ирттереҫҫӗ. Профсоюз организацийӗсем социализмлӑ ӑмӑртӑва ертсе пымаҫҫӗ.

Канашторгӑн 1948 ҫулта хӗрлӗ кӗтес пулнӑ. Халӗ унта магазин. Лекцисемпе докладсем, калаҫусем ирттерме вырӑн ҫук. Кружоксем ӗҫлемеҫҫӗ, стена хаҫачӗсем уявран уява ҫеҫ тухаҫҫӗ.

Канашторгри парторганизаци (секретарӗ В. Степанов юлташ) суту-илӳ работникӗсем хушшинче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе туса пырасшӑн, суту-илӳ ӗҫне тивӗҫлипе йӗркелесе ярассишӗн тӑрӑшмасть. Унта «ВКП(б) историйӗн кӗске курсне» вӗренмелли кружок организациленӗ пулнӑ. Кружокра пурӗ те икӗ занятиҫеҫ ирттернӗ. Политшкулра та занятисем йӗркеллӗ пулмаҫҫӗ. Канашторгра ҫамрӑк работниксене малта пыракансен ӗҫ опычӗсемпе паллаштармаҫҫӗ.

Ӗҫҫынни депутачӗсен хула Совет исполкомӗн суту-илӳ пайӗ (заведующийӗ А. Шляпникова юлташ) суту-илӳ работникӗсемпе канашлусем сахал ирттерет, исполком йышӑннӑ решенисене пурнӑҫласа пынине тӗрӗслемест.

Эпир Канаш хула Совет исполкомӗпе ВКП(б) хула комитечӗ тата Чӑваш АССР Суту-илӳ министерстви асӑннӑ ҫитменлӗхсене пӗтерессе, хулара культурӑллӑ суту-илӗве йӗркелес тӗлӗшпе тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнасса шанатпӑр.

И. КУЗЬМИН,
М. АЛЕКСАНДРОВ,
А. СОКОЛОВА,
Н. ВЛАСОВА.

Мускаври ситец туса кӑларакан пӗррӗмӗш фабрикӑра питӗ лайӑх продукци туса кӑларассишӗн социализмлӑ ӑмӑрту анлӑ сарӑлнӑ. 224 бригадӑна питӗ лайӑх продукци туса кӑларакан бригада ятне панӑ.

УКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: чи лайӑх машинист К. Баландина ситец анлӑшне виҫет. Вӑл кашни сменӑра заданирен ирттерсе 3 пин метр пир-авӑр туса кӑларать.

С. СТИХИН фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Районти хаҫатсенчен

Колхоз председателӗсен курсӗ

Сӗрпӳри ялхуҫалӑх техникумӗ ҫумӗнче колхоз председателӗсен курсӗсем ӗҫлеме тытӑнчӗҫ. Курсра республикӑри 7 районти колхоз председателӗсем вӗренеҫҫӗ.

Колхоз председателӗсем пӗр уйӑх хушшинче агрономи енӗпе, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес, колхоз производстви, фермӑсене механизацилес ыйтусемпе лекцисем итлеҫҫӗ.

Лекцисене ялхуҫалӑх техникумӗн преподавателӗсем, государство селекци станцийӗн тата районти ялхуҫалӑх пайӗн работникӗсем вулаҫҫӗ.

(«Сталинец»).

20 ҫул конюхра

Советски районӗнчи «Сталинград» колхоз членӗ И. Смирнов юлташ 20 ҫул хушши ӗнтӗ колхозра конюх пулса ӗҫлет. Вӑл 65 ҫула ҫитнӗ. Смирнов юлташ пӑхакан лашасем яланах таса та мӑнтӑр.

Хӑй пӑхакан пур кӗсререн те тихасем илсе, вӗсене вӑл лайӑх пӑхса ҫитӗнтерет. Колхоз правленийӗ ӑна темиҫе хутчен те премиленӗ.

Колхозри ытти конюхсем лашасене тӗрӗс пӑхма Смирнов юлташран вӗренеҫҫӗ.

(«Совет Ялавӗ»).

Ҫӗнӗ автомашинӑсем туянчӗҫ

Шӑмӑршӑ районӗнче автомашинӑсен паркӗ ӳсех пырать. Нумаях пулмасть «Гвардеец» тата «Заря» колхозсем «ГАЗ-51» маркӑллӑ ҫӗнӗ автомашинӑсем туянчӗҫ.

(«Сталин ялавӗпе»).

Районти строительство ӗҫӗ

Етӗрне районӗнчи колхозсенче строительство ӗҫӗ ҫултан-ҫул сарӑлса пырать. Иртнӗ ҫулталӑк хушшинче колхозсем пурӗ 60 вите туса лартнӑ.

Унсӑр пуҫне 3 гараж, тимӗрҫӗ лаҫҫи, 8 кормокухня тунӑ.

(«Большевик»).

Гизатулин рационализатор

Куславккари ҫуртсем тӑвакан заводри слесарьсем хушшинче улттӑмӗш разрядри слесарь В. Гизатулин пысӑк хисепре. Унӑн ӗҫ нормине тултарайман кун, уйӑх пулман. Кунсерен 2—3 норма тултарасси йӑлана кӗнӗ.

Анӑҫлӑ ӗҫлесси—норма тултарнинче кӑна мар. Ҫамрӑк рабочин пӗр чаплӑ пахалӑх пур. Ана нимӗнле нормӑца та висеймӗн. Ҫак пахалӑх вӑл—малашнехи ҫине хӑюллӑн пӑхни, творчествӑллӑ ӗҫлени, яланах ҫӗнӗ меслет тупма тӑрӑшни. Хӑйӗн пултарулӑхне кура ӗнтӗ Гизатулин юлташ заводри чаплӑ рабочи тата рационализатор шутланать.

...Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ пынӑ. Совет ҫыннисем, пурте пӗр ҫын пек пулса, хастарлӑ ӗҫпеле ҫӗнтерӳ тупталӑ. Хӗрарӑмсемпе ҫамрӑксем фронта кайнӑ упӑшкисем, пиччӗшӗсемпе ашшӗсем вырӑнне ӗҫе тӑнӑ.

Вӑрҫӑн хаяр ҫулӗсенче завода 14 ҫулхи Б. Гизатулин пырса кӗнӗ. Вӑл слесарь пулма ӗмӗтленнӗ. Ӑна М. Г. Яворский мастер участокне янӑ. Заводӑн пӗр цехри паллӑ стахановец Виктор Колесников слесарь Гизатулина инструментсемпе тата станоксемпе паллаштарнӑ, вӗсемпе ӗҫлеме вӗрентнӗ.

— Инструментсем яланах алӑ айӗнче пулмалла, шыраса вӑхӑт ирттермелле ан пултӑр,—тенӗ вӑл хӑйӗн ученикне.

Опытлӑ слесарьпе ҫамрӑк рабочие ӗҫ хыҫҫӑн кашни каҫах цехра курма пулнӑ. Слесарь-учитель Гизатулина уйрӑм операцисене мӗнле майпа туса пымалли ҫинчен каласа кӑтартнӑ.

Гизатулин хӑйӗн учителӗ сӗннипе библиотекӑна ҫӳреме пуҫланӑ, слесарь ӗҫӗ ҫинчен ҫырнӑ кӗнекесем вуланӑ. Чӑтӑмлӑн та тӑрӑшса вӗреннӗ. Вӗренни ӗҫре пысӑк пулӑшу панӑ. Вӑл часах ӗҫ нормине тултарма пуҫланӑ. Унӑн ӗҫне М. П. Яворский мастер та тимлӗ сӑнаса пынӑ, кашни кун пӗрер-икшер сехет хушши слесарь ӗҫне вӗрентнӗ. Ҫапла кадровӑй рабочипе мастер ӑна хӑйсен опычӗпе паллаштарнӑ, пурнӑҫӑн анлӑ ҫулӗ ҫине кӑларнӑ. Партипе комсомол организацийӗсем те Гизатулинӑн пурнӑҫӗпе тата ӗҫӗпе тӑтӑш интересленнӗ.

Виҫӗ уйӑх хушши ученик пулса ӗҫленӗ хыҫҫӑн Гизатулин техникӑллӑ экзамен тытнӑ, виҫҫӗмӗш разрядри слесарь пулса тӑнӑ. Унӑн ӗмӗчӗ пурнӑҫланнӑ: вӑл—слесарь!

Анчах коллектив хастарлӑ ҫамрӑка лӑпланса ларма вӗрентмен. Тата лайӑхрах ӗҫлемелле, пӗлӗве ӳстермелле пулнӑ. Цехра рабочисем ҫитмен, ӗҫ программине хушса панӑ. Плана сахал рабочисемпех тултармалла пулнӑ, кашни рабочие икшер-виҫшер ҫыншӑн ӗҫлеме тивнӗ. Ун ҫинчен Гизатулин пӗр хутчен кӑна мар цех начальникӗнчен, мастерпа кадровӑй рабочисенчен илтнӗ. Вӑл малта пыракансен ретне тӑрасшӑн ҫуннӑ. Ҫамрӑк слесарь опытлӑ рабочисем мӗнле ӗҫленине тимлӗ сӑнанӑ, ӑнланман чухне мастерсемпе инженерсенчен ыйтса пӗлнӗ. Ҫапла майпа ҫамрӑк рабочи малта пыракансен меслетне вӗренсе пынӑ, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстернӗ. Тӑрӑшни нихҫан та сая каймасть. Вӑл пӗр сменӑра икшер норма тултарса пыма пуҫланӑ. Часах заводра ун ҫинчен ырӑ ятпа асӑнма тытӑннӑ. Пӗррехинче Гизатулина комсомол комитетне чӗнтернӗ, ӑна фронта пулӑшакан комсомолецсемпе ҫамрӑксен бригадине ӗҫлеме куҫма сӗннӗ.

— Мӗнле пек, пултарӑн-и?—ыйтнӑ унтан комсомол комитечӗн секретарӗ.

Слесарь савӑннипе тата хумханнипе ҫийӗнчех хирӗҫ нимӗн те тавӑрса калайман. Пӑртак шухӑшласа тӑнӑ хыҫҫӑн ҫеҫ ерипен кӑна: пултаратӑп, тенӗ. Ҫапла Гизатулин хисеплӗ бригада членӗ пулса тӑнӑ. Бригадӑн пысӑк хӑвӑртлӑхӗсемпе ӗҫлеме тивнӗ. Гизатулин, комсомолецсем пулӑшнипе, вӑл хӑвӑртлӑха хӑнӑхнӑ, уйӑхри задание 10—11 кун хушшинче тултарма тытӑннӑ. Ҫапла ӗҫленӗ Гизатулин, тӑшмана ҫӗнтерме пулӑшнӑ.

...Тупӑ сассисем чарӑннӑ. Совет ҫыннисем мирлӗ ӗҫе пуҫӑннӑ. Пирӗн халӑхӑн творчествӑллӑ пултарулӑхӗ, талантӗ ҫӗнӗ, халиччен пулман вӑй-хӑватпа аталанчӗ. Гизатулин та ӗҫре ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тӑвать, хӑйӗн квалификацине ӳстерет. Вӑл туса кӑларакан продукци яланах пысӑк пахалӑхлӑ.

Ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерес шутпа ҫуртсем тумалли цехра конвейера ӗҫе янӑ. Ӑна вырнаҫтарса лартнӑ ҫӗре Гизатулин та хутшӑннӑ. Конвейер мӗнле ӗҫленине сӑнаса, ҫамрӑк слесарь вӑл тата лайӑхрах та тухӑҫлӑрах ӗҫлеме пултарассине туйнӑ. Щита алӑпа ҫаврса хаклӑ вӑхӑт нумай пӗтнӗ. Гизатулин пуҫӗнче алӑпа ӗҫлемелли штурвала механически штурвалпа улӑштарса лартас шухӑш ҫуралнӑ. Вӑл ҫав шухӑша пурнӑҫа кӗртме тимлӗ тӑрӑшнӑ. Конвейер ҫинче ӗҫлекен опытлӑ рабочисемпе, мастерсемпе тата инженерсемпе канашланӑ, механически штурвала мӗнле майпа тӑвасси ҫинчен тӗплӗ шухӑшланӑ. Юлашкинчен, тӗрӗс решени йышӑнса, ӑна пурнӑҫа кӗртнӗ—алӑпа ӗҫлемелли штурвал вырӑнне механически штурвал лартнӑ. Ҫамрӑк слесарь ӗмӗтленни пурнӑҫланнӑ: ӗҫ тухӑҫлӑхӗ чылай ӳснӗ, вӑхӑт перекетленнӗ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн Гизатулин ҫӗнӗ рационализаторла сӗнӳ парать. Вӑл щитсем ҫине клеме лартассине механически майпа тума пултаракан меслет тупать. Ку рационализаторла сӗнӗве пурнӑҫа кӗртни ҫулталӑкра 4 пин тенкӗ ытла перекетлеме пулӑшать. Гизатулин ҫапах лӑпланса ларман. Вӑл тимӗр касакан инструментсем час-часах юрӑхсӑра тухнине сӑнанӑ. Слесарь кӗнекесемпе хаҫатсенчен ҫакна пӗлнӗ: ҫӗршыври малта пыракан предприятисенче тимӗр касакан инструментсем туса хатӗрленӗ ҫӗрте электричество хӗлхемӗпе усӑ кураҫҫӗ. Гизатулин В. Псарев инженерпа пӗрле заводра паха ӗҫ пуҫарса янӑ—тимӗр касакан инструментсене электричество хӗлхемӗпе туса хатӗрлеме тытӑннӑ. Кун пек майпа туса хатӗрленӗ инструментсем ӗлӗкхинчен чылай ҫирӗпрех пулаҫҫӗ.

Инженерсемпе, техниксемпе тата ытти рабочисемпе пӗрле вӑл ҫулталӑк ытла ӗнтӗ пӑта ҫапса кӗртекен автомат тӑвас тесе ӗҫлет. Пӑтана механически майпа ҫапса кӗртме тытӑнсан ӗҫре вуншар рабочи сахалтарах кирлӗ пулать, ӗҫ тухӑҫлӑхӗ нумай ӳсет.

Иккӗленмелли ҫук, малалла, ҫӗнни патне туртӑнакан ҫамрӑк, инженерсемпе тата техниксемпе ҫыхӑнса ӗҫлесе, завод коллективне ҫӗнӗ изобретенипе савӑнтарӗ.

Стахановла ӗҫленипе пӗрлех, Гизатулин общественлӑ ӗҫе те активлӑ хутшӑнать, хӑйӗн пӗлӗвне ӳстерсе пырать. Завода ӗҫлеме кӗнӗ чухне вӑл пуҫламӑш шкултан кӑна вӗренсе тухнӑ пулнӑ. 1949 ҫулта ҫамрӑк рабочисен каҫхи вӑтам шкулӗнчен ӑнӑҫлӑ вӗренсе тухнӑ. Ҫамрӑк рационализатор илемлӗ тата техникӑллӑ литература нумай вулать, Гизатулин ҫав вӑхӑтрах—пултаруллӑ спортсмен.

— Мана завод коллективӗ, партипе комсомол организацийӗсем воспитани пачӗҫ. Вӗсене эпӗ чӗререн тав тӑватӑп, вӗсен шанӑҫне малашне те тӳрре кӑларӑп,—тет Гизатулин юлташ.

Халӗ вӑл ҫамрӑк рабочисене вӗрентет, унтан нумай ҫамрӑксем канашсем ыйтаҫҫӗ.

Н. ЕГОРОВ.

Икӗ тӗнче—икӗ итог

(„За прочный мир, за народную демократию!" хаҫат страницисем тӑрӑх)

Декабрӗн 28-мӗшӗнче Бухарестра «За прочный мир, за народную демократию!» хаҫатӑн ҫӗнӗ, 52(164)-мӗш, номерӗ тухнӑ. «Икӗ тӗнче—икӗ итог» ятлӑ умстатьяра хаҫат ҫапла ҫырать: тӗнчери малта пыракан пӗтӗм ҫынсене пӗрлештерсе тӑракан аслӑ лагерь—мир, демократи тата социализм лагерӗ —1951 ҫулта чаплӑ ҫӗнтерӳсем туса ҫӗнӗ, 1952 ҫула вӑйлӑ, хӑватлӑ, никам ҫӗнтереймен лагерь пулса кӗтсе илчӗ.

Аслӑ Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗ ҫултан-ҫул ӳссе вӑйланса пырать. Ленин—Сталин аслӑ партийӗ ертсе пынипе совет ҫыннисем халӑх хуҫалӑх планӗсене ҫулленех ирттерсе тултараҫҫӗ. Совет Союзӗнче 1951 ҫулта коммунизмӑн аслӑ стройкисенче ӗҫ анлӑн сарӑлса кайрӗ. 1952 ҫулта вӗсенчен пӗри Атӑл-Дон каналӗ ӗҫе кӗрет, ытти стройкӑсенче те ӗҫ нумай малалла каять, хирсене хӳтӗлемелли ҫӗнӗ вӑрмансем ӳссе лараҫҫӗ. Ҫак питӗ пысӑк строительствӑра тӗнчери халӑхсем Совет государстви миршӗн тӑрӑшнине уҫҫӑнах кураҫҫӗ.

Китай халӑхӗ, халӑх демократи диктатурин стройне ҫирӗплетсе пырса, хуҫалӑхпа политикӑри чи пахa задачӑсене татса парас тӗлӗшпе ӗҫлет, ҫав задачӑсенчен чылайӑшне вӑл татса пачӗ те ӗнтӗ. Ҫӗршывӑн калама ҫук пысӑк территорийӗнче, 310 миллион ҫын, урӑхла каласан, пӗтӗм Китай халӑхӗн виҫӗ пайӗнчен икӗ пайӗ пурӑнакан вырӑнта, ҫӗр реформи туса ирттернӗ. 1952 ҫулта ҫӗр реформине, тӗпрен илсен, пӗтӗмӗшпех туса ҫитереҫҫӗ. Ҫӗнӗ Китайра халӑх пӗрлӗхӗ ҫирӗпленсе пырать, пур национальноҫсем те политикӑллӑ пурнӑҫа хутшӑнаҫҫӗ.

Европӑри халӑх демократи ҫӗршывӗсем иртнӗ ҫулта социализм строительствинче пысӑк ҫитӗнӳсем турӗҫ, чи лайӑх техникӑпа ӗҫлекен ҫӗнӗ предприятисене ӗҫе ячӗҫ, ялхуҫалӑхне ӑнӑҫлӑн малалла аталантарса пычӗҫ, ялти производство кооперативӗсене ҫирӗплетрӗҫ, культура енӗпе ҫӗнӗ пусӑма ҫӗкленчӗҫ. Ку ҫӗршывсенче промышленность производстви шайӗ 1951 ҫул варринчех вӑрҫӑченхи хисепрен 1,5 хут, икӗ хут, виҫӗ хут, тӑватӑ хут иртсе кайрӗ.

Германи Демократиллӗ Республикинче иртнӗ ҫулта хуҫалӑха аталантармалли пӗррӗмӗш пилӗк ҫуллӑх плана ҫирӗплетсе пурнӑҫа кӗртме пуҫланӑ, ҫак план тӑрӑх промышленность продукцийӗн хисепӗ пилӗк ҫул хушшинче икӗ хута яхӑн ӳсет.

Экономикӑпа культура аталанӑвӗнчи ҫак ҫитӗнӳсене пурне те коммунистсен партийӗсемпе рабочи партисем ертсе пынипе халӑх массисем вӑя шеллемесӗр ӗҫленипе тунӑ.

«Иртнӗ ҫул,—тесе ҫырать хаҫат, — миршӗн тӑракан халӑхсен юхӑмӗ ҫав тери хӑватлӑн ӳссе сарӑлчӗ—халӑхсем хӑйсен кӑмӑлне активлӑн та ӑнлануллӑн кӑтартса пачӗҫ. Ҫак юхӑм империалистсене хӑратакан хӑватлӑ вӑй пулса тӑчӗ».

Капитализмлӑ ҫӗршывсенчи лару-тӑрӑва пӑхса тухса, хаҫат ҫакна кӑтартса парать: иртнӗ ҫулта США ертсе пыракан лагерӗн—демократне хирӗҫ, империализм лагерӗн—вӑйӗсем малалла хавшаса пычӗҫ, пӗтӗм капитализм кризисӗ тарӑнланса, сарӑлса пычӗ. Шалти хирӗҫӳсемпе ишӗлсе пыракан империализм, хӑй пуҫ пулса тӑрассине сыхласа хӑварас тесе, вӑрҫӑра ҫӑлӑнӑҫ тупма шутлать. Пур капиталимлӑ государствӑсенче те васкаса хӗҫпӑшал туса кӑлараҫҫӗ, экономикӑпа вӑрҫӑ ӗҫне пӑхӑнтарса пыраҫҫӗ, Совет Союзӗпе халӑх демократи ҫӗршывӗсене хирӗҫ агрессиллӗ блоксем тӑваҫҫӗ. Ҫак политика—вӑрҫа хатӗрленмелли политика—1951 ҫулта капитализм ҫӗршывӗсенчи миллионшар ӗҫҫыннисене ҫӗнӗрен цысӑк хӗн-хур кӳчӗ. США-ра 1951—1952 ҫулхи бюджет халӑх ҫине 1939 ҫулхинчен 76 хут пысӑкрах вӑрҫӑ расхочӗсене тиерӗ, 1951 ҫулта Англири ӗҫҫыннисене пурӑнма кирлӗ япаласем 25 процент хакланчӗҫ, Инди халӑхӗшӗн иртнӗ ҫул ҫынсем ҫуралассине чакармалли «план» кӳнӗ ҫул пулчӗ, Хӗвеланӑҫ Европӑри халӑхсемшӗн—Атлантика блокӗн ҫӗнӗ дивизийӗсене тунӑ ҫул, Хӗвеланӑҫ Германире ҫӗнӗрен Германи ҫарне тунӑ ҫул пулчӗ. Пӗрлешнӗ нацисен организацийӗн намӑс курнӑ ялавӗпе витӗнсе, империалистсем Корейӑра хӗрарӑмсемпе ачасене нимӗн хӗрхенмесӗр пӗтереҫҫӗ. Малайӑра, Бирмӑра, Вьетнамра, Индонезире, Филиппин утравӗсем ҫинче империалистсем текех империализм чури пулса пурӑнма килӗшмен халӑх массисене хирӗҫ вӑрҫа вӑрҫаҫҫӗ, Египетра мирлӗ халӑха ҫуралакан пульӑсемпе персе вӗлереҫҫӗ.

Юлашкинчен хаҫат ҫапла ҫырать: «Империализмпа вӑрҫӑ лагерӗ пысӑк кризисра, вӑл вӑйсӑрланса, хӑйӗн вилӗмӗ патне пырать. Мирпе демократи лагерӗ нихӑҫанхинчен те ҫирӗп, вӑл ӳсет, тӗреклене пырать, кашни ҫул ҫӗнӗ вӑй хушать. Ку лагерь ҫӗнтеретех, мӗншӗн тесен унӑн малти ретӗнче коммунистсен партийӗсем пыраҫҫӗ, вӑл партисен кӗрешӳ ялавӗ Ленин—Сталинӑн аслӑ та никам ҫӗнтереймен вӗрентӗвӗ пулса тӑрать».

Хаҫатӑн пӗррӗмӗш страницине «Халӑхсем хушшинчи мире ҫирӗплетнӗшӗн» паракан пӗтӗм тӗнчери Сталинла премисен Комитечӗ йышӑннӑ постановленипе тата редакци ҫырнӑ «Пӗтӗм тӗнчери Сталинла мир премийӗсен лауреачӗсем» ятлӑ статья пичетленӗ. Статьяра ҫапла каланӑ: «Мире юратакан халӑхсем, пӗтӗм тӗнчери Сталинла мир премийӗсен ҫӗнӗ лауреачӗсене саламласа, вӑрҫӑ чӗртекенсен киревсӗр планӗсене пӗтерсе хума, халӑхсем хушшинчи мире сыхласа хӑварса ҫирӗплетме татӑклӑ сӑмах параҫҫӗ».

Хаҫатра М. Митин ҫырнӑ «Творчествӑллӑ марксизмӑн аслӑ произведенийӗ» ятлӑ пысӑк статья пичетленнӗ, ӑна И. В. Сталинӑн «Тепӗр хут пирӗн партири социал-демократла сулӑнчӑк ҫинчен» ятлӑ произведенийӗ тухнӑранпа 25 ҫул ҫитнӗ ятпа ҫырнӑ.

Хаҫатра тата Германири Социалистла пӗрлӗхлӗ партийӗн ЦК секретариачӗн членӗ Пауль Фернер ҫырнӑ «Хӗвеланӑҫ Германире миршӗн кӗрешесси сарӑлса пырать» ятлӑ статьяна пичетленӗ. Статья авторӗ ҫапла ҫырать: Хӗвеланӑҫ Германие унта пуҫ пулса тӑракан ушкӑнсем илсе кӗртекен вилӗм ҫулӗ вӑрҫӑпа катастрофа патне илсе пынине нимӗҫ халӑхӗн анлӑрах та анлӑрах ийӗсем хӑйсен опычӗнчен курса ӗненеҫҫӗ. Аденауэр правительстви ҫӗршывӑн икӗ пайне те демократиллӗ никӗс ҫинче пӗрлештересси ҫинчен шутламасть, мире юратакан, никама пӑхӑнман Германи тӑвасси ҫинчен, мирлӗ договор тӑвасси ҫинчен шутламасть, начах урӑхла, вӑл Германи икӗ пая уйӑрӑлса тӑнине татах та тарӑнлатма, Хӗвеланӑҫ Германие тепӗр хут хӗҫпӑшаллантарма кӑна тӑрӑшать. Ку политикӑна халӑх кӑмӑлламасть, ку политика халӑха тарӑхтарать, халӑхӑн йышлӑ массисене хальхинчен те вӑйлӑрах хирӗҫ тӑма, кӗрешме ҫӗклет. Хӗвеланӑҫ Германири правительство Германири Коммунистсен партине ӗҫлеме чарма хӑтланни, ҫав вӑхӑтрах нацистсен организацийӗсене пулӑшса пыни—ҫаксем пурте халӑха ҫав тери тарӑхтараҫҫӗ. Хӗвеланӑҫ Германире мирпе пӗрлӗхшӗн кӗрешесси халиччен хинчен активлӑрах сарӑлса пырать, витӗмлӗрех формӑсем йышӑнать.

Хаҫатӑн ҫак номерӗнче Венгрири ӗҫҫыннисен партийӗн ЦК Политбюровӗн членӗ Йожеф Реваи ҫырнӑ «Тито—Америка империалисчӗсене тара кӗрешнӗ ҫын» ятлӑ статьяна пичетленӗ. Статья авторӗ ҫапла ҫырать: 1951 ҫулхи ноябрьте фашистла Тито-Кардель-Ранкович ушкӑнӗ Америка империалисчӗсемпе ҫар енӗпе пулӑшу илме договор тунӑ. Ҫак договор ӗнтӗ Югослави Америка агрессорӗсен вӑрҫӑ пункчӗ пулса тӑнине, Югослави ҫарӗ—вӗсен тара тытнӑ ҫарӗ пулса тӑнине уҫҫӑнах кӑтартса парать.

Америкӑпа Югослави тунӑ договор «тӑрӑх, Югослави ҫарӗ наступлени тума кирлӗ хӗҫпӑшал илет, ҫав хӗҫпӑшала тыткалама вӗрентме—Америкӑран специалистсемпе ҫар инспекторӗсем пымалла. Вашингтонри пуҫлӑхсемшӗн Югослави чи малтан ССР Союзӗпе халӑх демократи ҫӗршывӗсене хирӗҫ агресси тумалли вырӑн пулса тӑрать. Америкӑри тип ҫӗр ҫинчи ҫарсен генеральнӑй штабӗн начальникӗ Коллинс шӑпах ӗнтӗ ҫав шутпа договор тӑвас умӗн Югославие пырса кайнӑ, вӑл Тито ҫарне ҫӗршер миллион доллар панин усси пуррипе ҫуккине пӗлесшӗн пулнӑ. Паллах ӗнтӗ, Югослави фашисчӗсем ӑна ку ӗҫӗн усси пысӑк тесе ӗнентерме тем пекех тӑрӑшнӑ, Хӗвеланӑҫӗнчи хаҫатсем пӗлтернӗ тӑрӑх, Югославире Коллинса кӑтартма туса ирттернӗ ҫар маневрӗсен тӗп тӗллевӗ те ҫавах пулнӑ. Тито ушкӑнӗ Югослави ҫарӗ наступлени тума пултарнине, ӑна Америка империалисчӗсен агрессиллӗ вӑйӗсен шутне кӗртме юранине кӑтартса пама тӑрӑшнӑ.

Юлашкинчен Йожеф Реваи ҫапла ҫырать:

«Югославири фашистсен влаҫӗ халӗ ҫӗршывра ӗҫҫыннисене ҫав тери хаяр терророа пусарнипе тата урӑх ҫӗршывсенчи империалистсем пулӑшнипе тытӑнса тӑрать. Тито ушкӑнӗ Америка «пулӑшӑвӗпе» чи малта Югослави халӑхне хирӗҫ терророла ӗҫсем туса пыма усӑ курать.

Югослави фашисчӗсен ҫӗршыври лару-тӑрӑвӗ хавшаса, шанчӑксӑра тухса пынӑ май вӗсем авантюрӑсемпе вӑрҫӑ провокацийӗсем тума хавасах килӗшсе, Югослави халӑхне лайӑх пурнӑҫшӑн, ирӗклӗхпе никама пӑхӑнманлӑхшӑн кӗрешес ӗҫрен пӑрса яма тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та революциллӗ сыхӑлӑх пысӑк пулмалла, Югославири фашистла ушкӑн провокацийӗсене витӗр курса тӑмалла. Ҫавӑнпа та Югославири патриотсем Югославин ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхне кӗрешсе илме хӑйсен вӑйӗсене ӳстерсе пыраҫҫӗ».

Хаҫатра тата редакци ҫырнӑ «Шпионажпа диверси организаторӗсене намӑс юпи ҫине пӑталанӑ» ятлӑ статья, Вероника Порумбару ҫырнӑ «Тӑван кил пулса тӑнӑ ҫӗршыв» ятлӑ очерк, Ян Марекӑн «Политикӑллӑ заметкисене» тата тӑванла компартисен ӗҫӗсем ҫинчен информаци нумай пичетленӗ.

И. В. Сталин юлташ Киодо агентствин главнăй редакторĕ К. Ивамото господин патне янă послани пирки урăх çĕршывсенче мĕн çыраççĕ

Болгари

СОФИЯ, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Болгарири пур хаçатсем те И. В. Сталин Киодо агентствин главнăй редакторĕ патне янă телеграммăна пичетленĕ. Хаçатсем послани пирки çĕршыври политикăллă тата обществăллă ĕçри паллă деятельсем, паллă стахановецсем—Социализмлă Ĕç Геройĕсем тата Димитровла премии лауреачĕсем мĕн калани çинчен нумай пичетлеççĕ. «Работническо дело» хаçатра Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн членĕ Людмил Стоянов академик çапла çырать: И. В. Сталин Киодо агентствин главнăй редакторĕ патне янă телеграммăра совет халăхĕ Японин инкеке лекнĕ халăхне— Япони милитаризмĕн агрессиллĕ тата ăстăнсăр политикине пула инкеке лекнĕ, Америка оккупацийĕн йывăрлăхĕсене тÿссе пурăнакан халăха—тулли кăмăлпа хисепленине палăртнă.

Япони халăхĕ патне янă посланире Сталин ăшă кăмăллă тата пархатарлă сăмахсем каланинчен Совет Союзĕ мирлĕ политика тытса пыни тата вăл мĕнпур халăхсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хисеплени палăрса тăрать.

Америка империализмĕн пусмăрĕ айĕнче хĕн-хур курса пурăнакан Азири мĕнпур халăхсем тата ытти çĕрти халăхсем И. В. Сталин сăмахĕсене чун-чĕререн хапăл туса йышăнчĕç.

Венгри

БУДАПЕШТ, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Венгрире паян тухнă пур хаçатсем те И. В. Сталин Киодо агентствин главнăй редакторĕ К. Ивамото патне янă послание курăнмалли вырăнта пичетленĕ.

«Сабад неп» хаçат И. В. Сталин юлташăн посланийĕ çинчен редакци çырнă статьяна пичетленĕ. Ăна «Япони халăхне хавхалантаракан салам», тесе ят панă. Сталин юлташ çĕнĕ çул ячĕпе Япони халăхне саламлани Япони халăхĕшĕн кăна мар, тĕнчери мĕнпур халăхсемшĕн калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать,—тет «Сабад неп» хаçат.—Сталин юлташ посланийĕ вăл—мир посланийĕ. Çав посланирен пĕтĕм тĕнче, пуринчен малтан, Япони халăхĕ, Америка çар планĕсене хирĕç кĕрешес ĕçре ăна пысăк пулăшу панине туять, совет халăхĕпе унăн аслă сулпуçĕ Япони халăхĕ миршĕн тăнине ăнланса илнине, вĕсем ют çĕршыв оккупацийĕнчен хĕн-хур тÿсекен Япони халăхне тулли кăмăлпа хисепленине, ирĕклĕхпе миршĕн кĕрешес ĕçре ăнăçусем тума ырă суннине курать.

Совет Союзĕ Япони халăхне тăтăшах хÿтĕлени, сăмахран, союзниксен Япони валли тунă советĕнче пĕрмаях Япони халăхне хÿтĕлени çинчен хаçатра тĕплĕ çырнă.

Хаçат малалла çапла çырать: Япони империализмĕ çамрăк совет государствине хирĕç интервенци тăвас ĕçе хутшăннă, çапла вара Совет Союзĕн нишшер патриочĕсене тискеррĕн пĕтернĕ, нумай çулсем хушши Совет Союзне хирĕç тĕрлĕ преступленисем тунă. Анчах совет халăхĕ нихçан та. Япони халăхĕпе Японири агрессорсем пĕр йышши çынсемех тесе шутламан. Совет халăхĕ, хăйĕн идеологийĕ тăрăх, империалистсемпе халăх хушшинче пысăк уйрăмлăх пур тесе шутлать. Япони халăхĕ тĕнчери демократиллĕ вăйсен союзникĕ пулнине совет халăхĕ пĕлет. Совет халăхĕ Япони халăхне туслă пулса тата тулли кăмăлпа хисеплет. Сталин юлташ янă послани вăл—этемлĕхе чĕререн хисеплесе тата пĕтĕм тĕнчери мир политикине палăртса тăракан паха документ. Колониллĕ пусмăрта хĕн-хур курса пурăнакан мĕнпур халăхсем çак сасса илтрĕç, ку сасă вĕсене хавхалантарчĕ.

Тĕнчери пур вырăнсенче те миршĕн кĕрешекен çĕршер миллион çынсем ку послание мир ĕçне тĕреклетес тĕлĕшпе тунă çĕнĕ ĕç тесе шутлаççĕ.

Сталин юлташăн посланийĕ пĕтĕм тĕнчери халăхсен мир лагерьне никам та çĕнтерме пултарас çуккине ĕненсе тăрас шухăшне тата ытларах çирĕплетет.

Румыни

БУХАРЕСТ, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). И. В. Сталин Киодо агентствин главнăй редакторĕ К. Ивамото патне янă çыру çинчен «Вяца капиталей» хаçат çапла çырать:

И. В. Сталин юлташ Япони халăхĕ патне янă послани вăл—халăхсен мире сыхласа хăварассишĕн кĕрешес ĕçне вăйлатма пулăшакан çĕнĕ пысăк ĕç. Халăх тăшманĕсем—Америка империалисчĕсем Японири ĕçхалăхне тискеррĕн эксплуатацилеççĕ, Японирен Совет Союзне тата Китай Халăх Республикине тапăнмалли плацдарм туса хума хăтланаççĕ. И. В. Сталин посланийĕ Япони халăхне империалистла пусмăра хирĕç тимлĕ кĕрешме хавхалантарать.

Империалистсем Сан-Францискăра мирлĕ договор текенскерне турĕç. Вăл—Япони халăхне тата мире юратакан мĕнпур халăхсене хирĕçле договор. Империалистсем Япони империализмне çĕнĕрен çĕклентерме, Японири халăхсене вăрçăра вилсе пĕтмелли салтаксем туса хума хăтланаççĕ.

Совет Союзĕнчи халăхсем, ют çĕршыв агрессийĕнчен хĕн-хур курнăскерсем, Сталин юлташ янă чаплă посланире Япони халăхĕ хăйĕн никама пăхăнманлăхне туса хума пултарассине шанса тăни çинчен пĕлтереççĕ. И. В. Сталин юлташăн посланийĕ пĕтĕм тĕнчери халăхсене телейлĕ те ирĕклĕ пурнăçшăн кĕрешме хавхалантарать.

БУХАРЕСТ, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Бухарестри хаçатсем И. В. Сталин юлташ Япони халăхĕ патне янă послани çинчен нумай çыраççĕ.

«Скынтейя» хаçат хăйĕн умстатьинче: Сталин юлташ Япони телеграфĕн Киодо агентствин главнăй редакторĕ патне янă телеграмма тĕнчери халăхсен миршĕн кĕрешес ĕçри хăватлă хĕçпăшалĕ, паха документ пулса тăрать, тесе çырать.

Сталин юлташăн сăмахĕсенче совет идеологийĕн пархатарлă шухăшĕсене, халăхсем хушшинче тăванла килĕштерсе пурăнмалли пурнăç тăвас шухăшсене çырнă. Вĕсене Японин Америка оккупацийĕнчен хĕн-хур курса пурăнакан халăхне тулли кăмăлпа хисеплесе çырнă. Сталинăн кашни сăмахĕ Японири çынсен чĕрисенче хăйсен тăван çĕршывне ирĕке кăларассине тата ирĕклĕ те телейлĕ пурнăç тăвассине шанса тăрас шухăша вăйлатать.

Сталин юлташăн посланийĕнчи кашни сăмах Япони халăхĕн пурнăçри шухăшĕмĕчĕсене палăртса тăрать.

Аслă Сталин сăмахĕсенче вăл империалистла пусмăрта хĕн-хур куракан халăхшăн чунтан-чĕререн тăрăшни палăрса тăрать. Çакă пĕтĕм тĕнчери ĕççынниcене чун-чĕререн хумхантарать. Капитализмлă эксплуатацин тата империалистла оккупацин йывăрлăхĕсене тÿссе курнă Румыни халăхĕ Сталин юлташăн телеграммине пĕтĕм чун-чĕререн ырлать, Сталин юлташ Япони халăхне ырă сунни çумне пĕрлешсе, Японири ĕççыннисене ырă сунать.

«Ромыниа либера» хаçатра редакци çырнă статья пичетленнĕ. Унта çапла каланă: Сталин посланийĕнче мире юратакан мĕнпур халăхсем Японин хăйĕн нацин никама пăхăнманлăхĕшĕн, мир ĕçĕшĕн хастарлă кĕрешекен халăхне кăмăлланине палăртнă. Сталин посланийĕнче интернационализмла пархатарлă шухăш пур. Ку послани Япони халăхне унти милитаристла шайкăран уйăрать. Çав милитаристла ушкăн тĕнчери иккĕмĕш вăрçă пуçланнăшăн тата паян Америка империалисчĕсене çĕнĕ вăрçă пуçлама пулăшса пынăшăн ответ тытма тивĕçлĕ. Сталин посланийĕнче тĕнчери мĕнпур халăхсем Япони халăхĕ хăй ĕмĕтленнине чăннипех те пурнăçа кĕртессине шанса тăнине палăртнă.

«Вяца синдикала» хаçат «Пролетарилле интернационализмăн Сталин çырнă паха документчĕ» ятлă статьяра çапла çырать: Сталин юлташ Япони халăхне ырă сунничен совет çыннисем пархатарлă шухăш-кăмăлпа пурăнни курăнать. Социализмлă пĕрремĕш государствăна туса хунă, халĕ коммунизмлă общество тăвас тĕлĕшпе хĕрÿллĕ ĕçлекен совет çыннисем тĕнчери халăхсене пĕр-пĕринчен уйăрса яма çуккине пĕлеççĕ. Вĕсем халăхсен пĕр пек аслă интерессем, халăхсене мирпе ирĕклĕхшĕн кĕрешес ĕçре çыхăнтарса тăракан интерессем пуррине пĕлеççĕ. Сталин юлташ посланийĕ вăл халăхсем хушшинче курайманлăх сарма тăрăшакансене пурне те, хăйсен айванла шухăшĕсемпе этемлĕх малалла каяссине чарса лартма ĕмĕтленекенсене пурне те панă паха ответ пулса тăрать.

Албани

ТИРАНА, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). И. В. Сталин çĕнĕ çул ячĕпе Япони халăхне янă послание пур хаçатсем те пĕрремĕш страницăсенче, пысăк заголовоксемпе пичетленĕ.

И. В. Сталин посланийĕ çинчен Тиранăри радио тăрăх каласа панă. Радио тăрăх çапла каланă: Сталин юлташ çĕнĕ çул ячĕпе Япони халăхĕ патне янă послани—мир посланийĕ. Вăл Совет Правительствин сталинла мир политикине тепĕр хут уçăмлă палăртни, çĕнĕ вăрçа сирсе ярассишĕн кĕрешекен халăхсен аслă ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе тунă пысăк ĕç пулса тăрать. Сталин сăмахĕсем тата вăл ырă сунни çумне мĕнпур прогрессивнăй этемлĕх пĕрлешет. Прогрессивнăй этемлĕх сталинла мир политикине, халăхсем хушшинче хăрушсăрлăх тумалли политикăна яланах ырлать. Халăхсем Сталин юлташăн посланине историри пысăк пĕлтерĕшлĕ документ тесе шутлаççĕ.

Монголи Халăх Республики

УЛАН-БАТОР, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). И. В. Сталин юлташ Киодо агентствин главнăй редакторĕ Киисп Ивамото господин патне янă телеграммăна паян Монголири хаçатсем пĕрремĕш страницăра, пысăк заголовоксемпе пичетленĕ. И. В. Сталин юлташăн посланине Монголири радио тăрăх темиçе хутчен те вуласа панă. Республика столицинчи общественность И. В. Сталин юлташ Япони халăхĕ патне янă историллĕ посланипе хытă интереслет.

Германи

БЕРЛИН, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинăн хĕвелтухăçĕнчи пайĕнче паян ирхине тухнă хаçатсем пурте И. В. Сталин юлташ çĕнĕ çул ячĕпе Япони халăхĕ патне янă послание пĕрремĕш страницăсенче пичетленĕ.

Çак паха документ пирки «Нейес дейчланд» хаçат умстатья пичетленĕ. Унта çапла çырнă: «Ку послани Япони халăхĕшĕн кăна мар, мире юратакан мĕнпур халăхсемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ çыру пулса тăрать. Америка империалисчĕсем чылай çĕршывсене сĕмсĕрлене кĕнине, çав çĕршывсене питĕ хытă эксплуатациление тата вĕсене авантюристла вăрçăсене хутшăнтарма тăрăшнине халĕ пĕтĕм тĕнче курса тăрать».

«Çавăн пек лару-тăрура И. В. Сталин Япони халăхĕ патне хăйĕн послание ярать. Совет Союзĕнчи халăхсем Япони халăхне тулли кăмăлпа хисеплени çинчен калать, çапла вара вăл Японире пурăнакансене: Сирĕн çинчен манмен, эсир пĕччен мар! Хăвăрăн наци интересĕсене хÿтĕлессишĕн кĕрешес ĕçре тата хăвăр тăван çĕршывăн никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешес ĕçре ăнăçу тăвассине шанса тăрăр, тет».

Юлашкинчен, хаçат çапла çырать: И. В. Сталин çĕнĕ çул ячĕпе Япони халăхĕ патне янă послани мире юратакан мĕнпур çынсене мир ĕçĕ çĕнтерессине ĕненсе тăма çĕнĕ шанăç парать тата вĕсене миршĕн кĕрешес ĕçе вăйлатма, вăрçă пуçарма хĕтĕртекенсене хирĕç яланах кĕрешсе пыма чĕнет.

БЕРЛИН, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Берлинăн хĕвеланăçĕнчи пайĕнче тухакан «Ди Вельт» хаçат И. В. Сталин çĕнĕ çул ячĕпе Япони халăхĕ патне послани яни çинчен Токиоран пĕлтернĕ хыпара пичетленĕ.

И. В. Сталин çĕнĕ çул ячĕпе янă посланире Япони халăхне никама пăхăнманлăхшăн хастарлă кĕрешнĕ çĕрте тулли ăнăçусем тума ырă суннине хаçат уйрăмах палăртать.

США

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). И. В. Сталин юлташ çĕнĕ çул ячĕпе Япони халăхĕ патне послани ярса, Япони халăхĕ ют çĕршыв оккупацийĕнчен хăтăлма пултарассине шанса тăни çинчен калани, паллах ĕнтĕ, Америка оккупанчĕсене килĕшмен. Çавăнпа та çак паха документăн пĕтĕм текстне, ăна кĕскен çырнă пулин те, США-ри пысăк хаçатсенчен пĕри те пичетлеменнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук.

Америкăри пĕр хаçат та ку послани çинчен редакци çырнă статья пичетлемен.

Америкăри хаçатсем мĕншĕн нимĕн те шарламаннине ăнланса илме пулать ĕнтĕ. Япони халăхĕ «ют çĕршыв оккупацилене пирки инкеке лекнĕшĕн» шăпах та Америка империализмĕ айăплă.

И. В. Сталин юлташ посланийĕ пирки Америкăри хаçатсем хальхи вăхăтра нимĕн те шарламаççĕ пулсан та, юлашки эрнере Америкăри хаçатсемпе журналсем çинче Америка оккупацилесе тăнă условисенче Японире пурнăç начарланса çитни çинчен калакан хыпарсемпе статьясем чылай пичетленĕ. Ку статьясен авторĕсем питĕ сĕмсĕррĕн мăнкăмăлланса, Японие Америка çар бази тесе, Уолл-стрит питĕ пысăк услам илсе тăмалли вырăн. Америкăн Япони халăхĕ шучĕпе ырă курса пурăнакан капиталчăк офицерĕсемшĕн курорт пулса тăракан вырăн тесе шутлаççĕ.

Франци

ПАРИЖ, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Парижра ĕнер ирхине тухнă хаçатсем нумайăшĕ И. В. Сталин юлташ çĕнĕ çул ячĕпе Япони халăхĕ патне послани яни çинчен пĕлтернĕ.

«Юманите» хаçат çав документа пĕрремĕш страницăра пĕтĕмпех пичетленĕ. Страница варринче И. В. Сталин юлташăн портретне пичетлесе кăларнă.

«Либерасьон» хаçат И. В. Сталин юлташ посланийĕ çинчен çырнă статьяна çакăн пек ят панă: «Сталин юлташ японецсене: эсир ют çĕршыв оккупанчĕсене хирĕç кĕрешнине эпир ырлатпăр, тесе калать».

Францири буржуалла хаçатсем И. В. Сталин юлташ посланийĕ çинчен кĕскен кăна пĕлтернĕ.

«Комба» хаçат И. В. Сталин юлташăн посланине «Сталин Япони халăхне хисеплени çинчен калать» текен заголовокпа пичетленĕ. «Фран-тирер» хаçат ăна «Сталин Япони халăхне никама пăхăнманлăхшăн кĕрешес ĕçре тулли ăнăçлăх тума ырă сунать», тесе ят панă. «Се матэн-Ле пэи» хаçат И. В. Сталин юлташăн посланийĕ çинчен кĕскен пĕлтернĕ.

Финлянди

ХЕЛЬСИНКИ, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Финляндири хаçатсем И. В. Сталин çĕнĕ çул ячĕпе Япони халăхĕ патне послани яни çинчен пĕлтерекен хыпара пичетленĕ. «Тюэкансан саномат», «Вапаа сана», «Хельсинкгин саномат» тата «Мааканса» хаçатсем И. В. Сталин юлташăн посланине пĕтĕмпех пичетлесе кăларнă. «Тюэкансан саномат» хаçат И. В. Сталин портретне те пичетленĕ.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ мире сыхламалли килĕшÿ тума чĕнсе калани çине алă пустарас ĕç мĕнле пыни çинчен Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн секретариачĕ пĕлтерни

ПРАГА, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн секретариачĕ Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ пилĕк аслă держава хушшинче мире сыхламалли килĕшÿ тума чĕнсе калани çине алă пустарас ĕç мĕнле пулса пыни çинчен пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Пĕлтерÿре çапла каланă: мире сыхламалли килĕшÿ тăвассишĕн пыракан кампани вăхăтĕнче 1952 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен чĕнÿ çине пĕтĕмпе 596.302.298 çын алă пуснă. Уйрăм çĕршывсем тăрăх чĕнÿ çине çакăн чухлĕ çын алă пуснă: Албани—865.885, Алжир—120 000, Германи (халăхран вăл çĕршыва çĕнĕрен хĕçпăшаллантарнине хирĕç тата мирлĕ договор тăвассишĕн пулни çинчен ыйтса пĕлни)—16.700.000. Аргентина—3 миллион, Австрали—90 пин, Австри—871.021, Бельги—409,092, Бирма — 129.830, Боливи—8.500, Бразили—3 миллион, Болгари—5.627.000, Канада—270 пин, Чили—500 пин, Китай—344,530.057, Кипр—103.824, Колумби—25 пин, Корея—7.047.821, Коста-Рика—34 пин, Куба—850 пин, Дани—128.278, Египет—100 пин, Испани—400 пин, Финлянди—550 пин, Франци—10 миллион, Англи—833 пин, Греци—36.725, Гватемала—100 пин, Голланди—342.598, Венгри—7.148.000, Инди—1.700.000, Индонези—609.163, Ирак—20 пин, Иран—1.961.198, Израиль—354.159, Итали—16 миллион, Япони—6 миллион, Ливан—200 пин, Мексика—300 пин, Монголи—633.877, Норвеги—30 пин, Пакистан—14 пин, Парагвай—16 пин, Перу — 5.578, Польша — 18.053.000, Пуэрто-Рика—20 пин, Португали—40 пин, Румыни—11.060.141, Таиланд—152.531, Швеци—265 пин, Швейцари—61.800, Сири—265 пин, Чехословаки—9.020.522, Трансиордани—22 пин, Триест—80 пин, Тунис—130 пин, Кăнтăр Африка Союзĕ — 5 пин, СССР — 117.669.320, Уругвай—216 пин, Венесуэла—45 пин, Вьетнам—7.532.378.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн главнăй командованийĕ январĕн 4-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсемпе пĕрле халичченхи вырăнсенчех тăрса, тăшмана хирĕç тупăсемпе тата пулеметсемпе переççĕ, Америкăпа Англи агрессорĕсен çарĕсене тата Ли Сын Ман çарне пысăк сиен кÿреççĕ.

Январĕн 1-мĕшĕпе 2-мĕшĕнче Халăх çарĕн чаçĕсем хĕвеланăçĕнчи çыранра, Ли Сын Ман çарĕн чаçĕсене Оньчжинь çурма утравĕнчен кăнтăртарахри Енподо тата Сунидо утравĕсем патне çитиччен хăваласа пынă та пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Хĕçпăшал тата снаряжени нумай тытса илнĕ.

Америка авиацийĕ çаплах Пхеньян çине бомбăсем пăрахать

ПХЕНЬЯН, январĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Январĕн 3-мĕшĕ умĕнхи кас тата январĕн 3-мĕшĕнче кăнтăрла Америка бомбардировщикĕсемпе реактивлă истребителĕсем тепĕр хут Пхеньянри халăх пурăнакан кварталсем çине тата хула сывăхĕнчи вырăнсем çине бомбăсем пăрахнă, пулеметсемпе пенĕ.

Вут тивертекен шĕвеклĕ бомбăсем пăрахнă хыççăн хулара халăх пурăнакан темиçе çурт çунма тытăннă, темиçе çĕрте пушар тухнă. Авиаци бомбисем тÿрремĕнех лекнипе Чанчжонри, Чонрори кварталсенче, мирлĕ халăх пурăнакан ытти вырăнсенче халăх пурăнакан çуртсем арканнă.

Вилнисемпе аманнисем пур.

„Шуман планĕ“ нимĕç халăхне кĕретĕнех улталани

БЕРЛИН, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви Дюссельдорфран пĕлтернĕ тăрăх, Германири коммунистсен партийĕн центральнăй органĕ—«Фрейес фольк» хаçат ятарласа çырнă умстатьяра Аденауэрпа унăн хаçачĕсем «Шуман планне» хăвăртрах йышăнтарас шутпа Бонри парламента мĕнле меслетсемпе хĕсни çинчен каласа кăтартнă.

«Шуман планне» йышăнсан, хĕвеланăçĕнчи державăсем Рур промышленноçне ытлашши вăйлатма тата çар хатĕрĕсем тума чарнине, Рур статутне пăрахăçлама килĕшни тата оккупацилекен державăсем нимĕçсен экономикине пÿлес шутпа тунă йĕркене пăрахăçлама килĕшни çинчен Аденауэрăн Америка долларĕсене нумай илсе тăракан хаçачĕсем кăшкăраççĕ,—тесе çырать «Фрейес фольк» хаçат.—Анчах çакă вăл халăха кĕретĕнех улталани пулать. Хĕвеланăç Германири халăх хушшинче, çав шутра буржуалла сийсем хушшинче те, «Шуман планне» йышăнассине хирĕç тăрас шухăш вăйланать».

Унтан хаçат çапла çырать: «Рур промышленноçне ытлашши вăйлатма тата çар хатĕрĕ тума чарас тĕлĕшпе тунă йĕрке чăннипе çаплипех юлать. Унтан та начартарах пулать: Шуман планĕн «аслă органне» панă правасем Рур промышленноçне хальхинчен ытларах пÿлме май параççĕ. Рур валли тунă тĕнчери çĕршывсен органĕ çĕр кăмрăк мĕн чухлĕ кăлармаллине палăртса панă тата нимĕç çĕр кăмрăкне валеççе тăнă. Рур валли тунă тĕнчери çĕршывсен органĕн унăн ĕçĕсене хирĕçле мĕнпур законсене пăрахăçлама право пулнă. Рур валли тунă тĕнчери çĕршывсен органĕ ăна никам тĕкĕнмелле мар правăпа усă курнă. Çак пĕтĕм ĕçе татса паракан правăсене халĕ «аслă органа» параççĕ. Кунсăр пуçне, «аслă орган» предприятисен укçа-тенкине пĕрпĕрин хушшинче хăйне кирлĕ пек валеçме, сахал «тупăш паракан» шахтăсене хупса лартма хушма, ĕç укçи хисепне тата таварсен хакĕсене хăйне кирлĕ пек улăштарма пултарать. Вăл хăй тĕллĕнех Хĕвеланăç Германири рабочисене Францири шахтăсене, Франци рабочийĕсене нимĕçсен шахтисене куçарма пултарать. «Шуман планĕнче» палăрнă тăрăх, «йĕркесĕрлĕхсене хирĕç кĕрешме» Франци çарĕсене Хĕвеланăç Германие илсе килме, нимĕçсен çĕнĕрен тăвакан çарĕн салтакĕсене Францие илсе кайма пултараççĕ, унта вĕсемпе нимĕçсен горнякĕсене тата Франци горнякĕсене хирĕç, ĕç укçи ÿстерме ыйтакан рабочисене хирĕç кĕрешес ĕçре усă курĕç. Рур валли тунă тĕнчери çĕршывсен органĕнче хăшнĕр мерăсене пурнăçлама палăртнине хирĕç тивĕçлĕ çĕршывсен представителĕсемпе парламенчĕсем протестлемелли йĕрке пекки юлнă пулсан, «Шуман планĕнчи» йĕрке тăрăх çавăн пек тума пачах та май килмест, парламент енчен контроллесе тăмалли йĕрке пулмасть. «Шуман планĕ» тăрăх тĕнчери çĕршывсен трестне тăваççĕ, ăна нимĕçсен ĕçĕсене туса тăма полномочи параççĕ... Çапла вара, нимĕç халăхне тата хытăрах пусмăрлама тытăнаççĕ».

«Нимĕç халăхне çавăн пек улталани Аденауэрпа Шумахерăн сутăнчăкла политикине кăтартса парать. Пирĕн тăван çĕршыва çĕнĕрен пĕрлештернĕ условисенче кăна нимĕç экономикине чăннипех те ирĕке кăларма май пулать. Çав çулпа каймаллине кăтартса парасси — наци тивĕçĕ».

АНГЛИ АГЕНТСТВИ ЕГИПЕТРИ ЛАРУ-ТĂРУ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Каиртан çакăн çинчен пĕлтерет: паян Суэцра Англи салтакĕсемпе Египет çыннисем хушшинче тытăçу пулнă. Египетăн шалти ĕçсен министрĕ: çав тытăçу вăхăтĕнче Египет çыннисем Англин 15 салтакне вĕлернĕ, тенĕ.

Англи çарĕсем Суэц патĕнче каллех Египет çыннисене тапăннă

КАИР, январĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Ирхине тухакан хаçатсем пурте Англи çарĕсем Суэц патĕнче Египет çыннисене тепĕр хут тапăнни çинчен пĕлтереççĕ.

«Аль-Мысри» хаçат çапла çырать: Англи броневикĕсем Суэц патĕнче вĕсене кĕме чарнă района пынă та Египет çыннисем çине тупăсемпе тата пулеметсемпе пеме тытăннă. Çав районта пурăнакан çынсем, вăл шутра хĕрарăмсемпе ачасем те, Англи салтакĕсене хирĕç тăнă. Тытăçу пуçланса кайнă вырăна Египет полицийĕн отрядне янă. Ку отрядăн ирĕксĕрех Англи салтакĕсене хирĕç çапăçма тытăнмалла пулнă.

Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, çапăçура акăлчансем 22 çын вилнĕ, 40 çын аманнă. Египет çыннисем 18 çын, çав шутра икĕ ача, аманнă.

«Аль-Ахрам» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, «икĕ танкпа икĕ броневика вут хыптарнă, вĕсем хăйсен экипажĕсемпе пĕрле çунса кайнă». Çапăçăва Англин 1.800 салтакĕ хутшăннă.

ЛОНДОН, январĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернинчен çакă паллă пулнă: Англин Суэц каналĕ патĕнчи çарĕсем Суэц каналĕ тăрăхне Египетăн ытти пайĕсенчен пĕтĕмпех уйăрнă, Суэца пымалли тата Суэцран каймалли çулсем тăрăх çÿреме чарнă.

Францие Америкăн çĕнĕ çар чаçĕсене илсе пыраççĕ

ПАРИЖ, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Францие Америкăн оккупаци çарĕсем тăтăшах пырса тăраççĕ. Парижри хаçатсем çакăн пек хыпар пичетленĕ: Францин наци оборони министерствинче пĕлтернĕ тăрăх, çитес кунсенче Францие Америка авиацийĕн 117-мĕш полкĕ—«тактикăллă разведка» полкĕ пырса çитет. «Юманите» хаçат çав полка Туль хулине (Мертпа Мозель департаменчĕ) вырнаçтарма палăртни çинчен тата Туль хули Америка çарĕн бази пулса тăрасси çинчен çырать.

Çав хаçатах çитес вăхăтра Америка авиацийĕн Шартр хулинчи (Эрпа Луара департаменчĕ) базине пысăклатма тата Америка оккупанчĕсен аллине панă казармăсене юсаса лайăхлатма 40 миллион франк укçа пама палăртни çинчен пĕлтерет.

Акăлчансем арабсене хĕсĕрлеççĕ

ПРАГА, январĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Телепресс агентствин спецкорĕ Каиртан çапла пĕлтернĕ: акăлчансем Йеменăн чикĕ сывăхĕнчи районĕсенче, Аден протекторатĕнче, Яхья тата Ад-Далджа районĕсенче, çавăн пекех тата Аттака хули районĕнче пурăнакан арабсене хытă хĕсĕрлеме пуçланă. Çав районсенче пуринче те Англи влаçĕсем аэродромсем, стратегиллĕ çулсем тăвас ĕçе тата çар валли кирлĕ ытти ĕçсене анлă сарнă.

Иртнĕ çулхи ноябрь уйăхĕн вĕçĕнче акăлчансем ку районсене «никам та пырса кĕмелле мар вырăнсем» тесе пĕлтернĕ, унта пурăнакан арабсене куçса кайма приказ панă. Аттака хулинче пурăнакансем, Бени Хаюифа Хардан тата Бени Хиляль йăхĕнчи çынсем, акăлчансен законсăр ĕçĕсене хирĕç протестленĕ, вĕсем хăйсен çĕрĕсем çинчен куçса кайма килĕшменни çинчен пĕлтернĕ. Кун хыççăн Англи влаçĕсем Аттака хулине танклă çар чаçĕсем янă. Çар чаçĕсем хулари мирлĕ халăхăн çурчĕсем çине тата пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса çÿрекен çынсем хула сывăхĕнчи хÿтлĕхĕсем çине тупăсемпе пенĕ. Çавна пула темиçе çĕр çын, вăл шутра хĕрарăмсем, ачасем тата стариксем вилнĕ тата аманнă. Арабсен нумайăшĕн ирĕксĕрех çав вырăнтан тухса тармалла, пурăнмалли вырăн шырама Йеменăн кăнтăрти пайне каймалла пулнă.

Америка самолечĕ Венгри чикки урлă вĕççе каçнă пирки

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли ньюс» хаçатра Джон Оъ Доннелл обозреватель çырнă статья пичетленсе тухнă. Вăл Америкăн Венгрирен кăларса янă 4 летчикĕ пирки государство департаменчĕпе Пентагон (çар ведомстви) хушшинче хирĕçÿ тухни çинчен çырать. Çав летчиксем самолетпа Венгрин государство чикки урлă вĕççе каçнă пулнă.

Обозреватель çапла çырать: «Хальхи вăхăтра çав кĕрешÿ питĕ вăрттăн пулса пырать. Вăл нумай вăхăт хушши çавăн пек пулса пырĕ. Уççăнах кĕрешме пуçласан вара, государство департаментĕнчи дипломатсем çар командованине хăйĕн ĕçне тума пĕлменшĕн, разведка начар ĕçленĕшĕн тата ытти ĕçсемшĕн те айăплама тытăнĕç. Государство департаменчĕ çавăн пек йывăрлăха кĕрсе ÿкнĕшĕн çар командованийĕ тÿрремĕнех айăплă, тесе калĕç. Çаксем пурте вара çар тумтирĕ тăхăннă, çилленсе çитнĕ çынсене тата ытларах тарăхтарĕ.

Паллах ĕнтĕ, хĕçпăшаллă вăйсен командованийĕ кун пирки тарăхать, анчах уççăн нимĕн те шарламасть. Государство департаменчĕ оборона министерствинчен Америка летчикĕсене ирĕке кăларнă хыççăн вĕсен государство департаменчĕн представителĕ пырса çитиччен хаçатсем валли нимĕнле заявлени те тумалла мар тесе ыйтни çар çыннисене кăмăла кайман».

Çĕнĕ çул пасарĕ

ЧУРАЧĂК. Çĕнĕ çул ячĕпе район центрĕнче пысăк пасар пулса иртрĕ. Унта Чурачăк, Красноармейски, Шăхасан тата ытти районсенчи колхозсемпе колхозниксем тата колхозницăсем ялхуçалăх, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем нумай илсе тухрĕç. Çăнăх, ыраш, тулă, çавăн пекех ашкакайпа сĕт-çу хакĕсем иртнĕ пасарсенчи хаксенчен 10—15 процент йÿнĕрех пулчĕ.

Пасарта колхозниксемпе ялти интеллигентсем районти магазинсенчен тата ытти çĕртен илсе тухнă промышленноçпа апат-çимĕç таварĕсем нумай туянчĕç. Нумай колхозниксем патефонсем, радиоприемниксем, кĕнекесем тата ытти культура таварĕсем туянчĕç.

А. ИВАНОВ.

Çĕнĕ кĕнекесем

Чăваш АССР государство издательстви çавăн пек кĕнекесем чăвашла пичетлесе кăларнă:

Профессор А. А. Михайлов.—Хĕвел тата уйăх тĕттĕмленни. 48 стр., 2.000 экз., хакĕ—70 пус.

И. И. Иванов.—Кайăк-кĕшĕк фермине ĕçлекенĕн мĕн пĕлмелле. 142 стр., 2.000 экз., хакĕ 2 т. 10 пус.

И. Маркелов—Сережа (калав). 28 стр. 3.000 экз., хакĕ—65 пус.

Ответлă редактор М. К. КОСТИН.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлă редактор—0-67, ответлă редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—4-17, ялхуçалăх пайĕ—3-97, пропаганда пайĕ—8-61, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00303 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.